41-259

УХСАЙ ЯККӐВӖ



# ЁМӖТ

ЧАССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ • 1941

Обязательный
контрольный
экземпляр

УХСАЙ ЯККӐВЕ

№ 154

# ӖМӖТ

РОМАН

*ПӖРРЕМӖШ КӖНЕКЕ*

ЧӐВАШ АССР
ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР ◆ 1941

Редактор КУЗЬМА ЧУЛГАСЬ.

НТ3119.
Тираж 3500 экз.
Формат бум. $60\times92$ 1/32
Подписано к печати 20/V 1941 г.
Объем 3,25 печ. л.
Заказ № 1269.

Типография № 2 Управления Издательств и Полиграфии при СНК ЧАССР. г. Алатырь.

## ЛЕНИН ÇУРЧĔ УМĔНЧЕ

Панулми илемлĕ сачĕ
Тутлă шурă çеçкере.
Тахçанах хула лăпланчĕ,
Кăнтăр çилĕ çеç вĕрет.

Эп пырса пĕччен тăратăп
Ту çинчи Венец[1] умне,
Куç илмесĕр асăрхатăп
Лăпкă каçăн ыйхине.

Тӳпере сап-сарă уйăх,
Санĕ—Атăл çийĕнче.
Тĕлĕрет мăн Атăл уйĕ
Улăхра, утрав çинче.

Пит пуян кунти тавралăх,
Çутă кӳлĕ те вăрман.
Кун пек лайăх çутçанталăк
Ĕмĕрте те эп курман.

---

[1] Венец—çӳллĕ ту тӳпи, унта Ульяновск хулинчи библиотека çурчĕ ларать.

Янраса кĕпер кĕрлерĕ,
Çутă поезд мĕн кĕрет.
Чĕнтĕрлĕ Чĕмпĕр кĕперĕ
Шавлă пулнă ĕлĕкрен.

Ун çинчен ăсаннă гений—
Иванов—таван хирне,
Нӳр тăпра ăна пĕркенĕ,
Йышăннă хăй ывăлне.

Иванов тăпри чап янă
Вĕçсĕр-хĕрсĕр хумханан
Хирсенчен кунта Ульянов
Ĕлĕк утнă хулана

Эпĕ килтĕм. Аслă Ленин
Пуранна çурт умĕнче
Юрлама хама пилленĕ
Ĕмĕрхи телей çинчен.

Эп утатăп. Янкăр уçă
Уйăхлă та лăпкă каç.
Аллейре пĕрре пĕр çулçă
Чăштăр-чăштăр хускалмасть.

Ĕлĕкхи хула гимнази
Çурчĕ, халĕ вăл рабфак.
Ĕлĕкех те Чĕмпĕр каçĕ
Пулнă симĕс, кăн-кăвак.

Ун чухне вăл, çамрăк Ленин,
Çакă çуртăн умĕнче,
Атăла шевли тĕрленĕ
Çакă уйăх айĕнче

Ялкăшса çунса илемлĕ
Тăракан çăлтăрсене
Куçĕпе пăхса иленнĕ,
Илнĕ тимлĕ çуттине.

Çакăнта вăл, çамрăк Ленин,
Акă çак тăпра çинче
Чăрсăр Атăла итленĕ,
Хăйĕн пысăк чĕринче

Аслă Атăл каçлăн-ирлĕн
Кĕрмешсе кĕрленине
Ĕлĕк илнĕ, ӳчĕ-тирĕ
Пухнă унăн хăватне.

Эп утатăп, кашни пусăм
Шăплăхра ян янăрать,
Чул сасси те çывăх тусăм
Калаçни пек туйăнать.

Ун çине пусман-ши Ленин —
Тетĕп эпĕ ăшăмра.—
Мĕн калать çилпе кĕрленĕ
Ватă йывăç, ват йăмра?

Ун çулçи те маншăн юрă,
Пысăк юрă пĕлнĕ пек
Хускалать. Унтах пĕр хурăн
Калаçать-мĕн çилсемпе.

Ĕлĕкхи Мускав урамĕ.
Халĕ Ленинăн. Çап-çут.
Тăршшĕпе çунать хунар мĕн.
Ак пĕр хутлă хĕрлĕ çурт.

Çакăнта хăватлă Ленин,
Тĕнчене вĕрентекен,
Çут хĕвеллĕ аслă гений
Ӳснĕ, çитĕннĕ иккен.

Çакăнта вăл, çамрăк Ленин,
Çакă çуртăн ăшĕнче,
Панулми çеçки тĕрленĕ
Çакă садăн хӳттинче

Çăмăллăн утса çӳренĕ,
Çакă алăк хăлăпне
Пĕчĕк чух тытса силленĕ,
Пуснă çак хăма çине.

Çакă вată улмуççийĕн
Нар пек хĕрлĕ улмине
Ирхине татса вăл çинĕ,
Ларнă унăн сулхăнне.

Асларан та асла Ленин
Ӳсне ҫака ҫӗр ҫинче,
Ӗмӗрех пире пилленӗ
Чӑн телейлӗ ҫут тӗнче.

Савӑнса утмашкӑн лайӑх
Ҫакӑ чаплӑ ҫӗр ҫинче.
Юлташсем, пурте пуҫ тайӑр
Ленин ҫурчӗ умӗнче!

---

Ыр çын вилет—
ят юлать.

*М. Федоров.*

## 1. ХУР СУХАЛ

Ирхине. Тин шурăмпуçĕ
Кĕмĕлленчĕ инçетре.
Выртмари пĕччен вут куçĕ
Çĕрĕпех пĕр вĕçсĕрех
Çунчĕ те хуллен лăпланчĕ,
Тĕксĕмленчĕ паçăрах.
Ту çине тĕтре хăпарчĕ
Сĕт пек шурă та çăра.
Çутçанталăк кăвакарчĕ,
Сарăлчĕ ирхи тĕнче.
Вĕçкелерĕ кăвакарчăн
Хутса янă çурт çинче.
Ялтлатса унта, кунта та
Хăйçути сÿнет ялта.
Çын тăрса ĕçне пуçлатăр!—
Авăтать чĕнсе автан.
Шыв ăсма каять хĕрарăм
Шăлтăр-шăлтăр витрипе.
Уйăх сÿнчĕ те мăнтарăн
Хупланать кун çуттипе.

———

Ял хуçи, çĕрме пуянĕ,
Çеп-çемçе тӳшек çинче
Вăранать—ыйхи саланĕ
Ир хĕвелĕ çуттинче.
Пӳрт умне тухать те халĕ
Каранать, вăйне кӳртет,
Тĕксем лекнĕ хур сухалĕ
Лăстăр-лăстăр силленет,
Силленет çил вĕрнĕ майăн
Арман чул пек сарлака
Кăкăрĕ çинче.

Нумайăн
Шăнкăрчсем пĕр авăка
Шăхăрса пĕр юрă янă
Пӳрт карнисĕ çийĕнче.
Сикесси килет пуянăн,
Вĕçĕмсĕр пĕтĕм тĕнчен
Çарине уçма йĕс уçă
Илнĕ пек мухтанасси
Килнине тӳсместь.

Янк уçă
Янăрать шăнкăрч сасси.
Мĕншĕн-ха вăл ан мухтантăр?
Тивĕçĕ хăй аллинче.
Шурă çĕмĕрт çӳллĕш кантăр
Таврари улăхсенче
Çӳлленех ăнса ӳсмен-и,
Кĕркунне ун ушкăн хур
Киклатса питех маттур

Çарăмсан çинче вĕçмен-и?
Пĕлĕт пек нумай капанĕ
Сарлака анкартинче
Кивелсе çич çул ларман-и
Сакăршар ура çинче?
Тĕрекпе тыттарнă халĕ
Тайăлнă капансене.
Выльăх-чĕрлĕх ун сахал-и?
Вăтăр учĕ кĕçенет.
Çулленех мулсем хăпарчĕç
Сăлăплă кĕлетсенче.
Ушкăн-ушкăн кăвакарчăн
Хаяр выçлăх çулсенче
Таранать ун килĕнче.
Мухтанма хăвачĕ унăн,
Тивĕçĕ чăнах та пур.
Çурт-йĕрне хула пек тунă,
Хĕллехи тăманлă юр
Пĕр çĕрте те çурăк-çарăк
Шыраса та тупаймасть,
Вăрхурах лаша мар, çарăк
Çаклатаймĕ тĕксĕм каç.
Утмăл чалăшлă та анлă
Пысăк килкарти тавра
Кăшăл пек хӳме мăкланнă,
Вĕлтĕренлĕ, хуп-хура.
Акăш-макăш муллă чапĕ
Паллă çакă таврара.
Ахальтен тытмасть нӳхрепĕ

Çич çул йӳçнĕ пыл-сăра.
Çул çинче ăна ал-хапăл
Ăнсăртран курас пулсан,
Тиексем тăваççĕ хапăл,
Çĕлĕксем вăр-вар сулса.

---

Ирхине. Хĕвел хĕлхемĕ
Мал енче йăр-яр вылять.
Утă пек çĕклем-çĕклемĕн
Çăра пĕлĕт йăтăнать.
Чĕнтĕрлĕ хапха яр уçă.
Выльăх тухрĕ витерен.
Чи малта вĕсен çулпуçĕ
Мăнтăр вăкăр мĕкĕрет,
Мĕкĕрет те икĕ шитлĕ
Мăйраки çĕре чĕрет,
Нар пек хĕрлĕ кикириклĕ
Автана хӳтеркелет.
Çурт хуçи, мухтан та савăн
Çакă пурлăха кура!
Пӳрт пусми çинче тăрать вăл,
Тĕклĕ çӳçĕ çăп-çăра.
Вăл хуллен утса çӳрерĕ
Ват йăмралăх айĕнче,
Аллипе шăлса турарĕ
Сухалне йĕс турипе.
Халиччен вĕсен кив ялĕ
Кун пекех сухал курман.
Пит мухтавлă ун сухалĕ,

Кӑн-кӑвак, чӗркуç таран.
Çавӑнпа çеç илнӗ вырӑн,
Пулнӑ ялшӑн старӑста.
Ячӗ аслӑ, ячӗ ырӑ,—
Пичетпе саккун унта.
Тӗнчере ун пек сухаллӑ
Этемсем сайра, сахал.
Таврара пуриншӗн паллӑ
Унӑн ячӗ—Хур Сухал.
Хур Сухал тесен, çын чунӗ
Чӑх чӗппи пекех хӑрать,
Сар хӗвеллӗ кӑнтӑр кунӗ
Пӗлӗтлӗ пек туйӑнать.
Хур Сухал тесен, хӑрушӑ,
Чӗрене те сивӗ-мӗн:
Унӑн аллинчи чӗн пушӑ
Сахалах çынна вӗтмен.
Мулӗ пысӑк та Сухалӑн,
Кӑсъинчи укçи пин-пин.
Хӑраса минренӗ халӑх
Пысӑк вырӑн панӑ мӗн.
Вӑл хисеплӗ те хӑватлӑ!
Вак-тӗвек пӑхӑр çинче
Выртакан çап-çутӑ хаклӑ
Ылттӑн тенкӗ пек пӗччен
Пурӑнать пуçне таймасӑр
Ял куштанӗ—асапа,
Сухалне куллен манмасӑр
Якатать йӗс турапа.

## 2. ПУХУ

Килкартисĕр, тăйлăк-тайлăк,
Çĕрĕк-çарăк пÿрт умне
Ушкăн-ушкăн кăткă майлă
Килнĕ халăх ирхине.
Тĕрлĕрен çынсен тумтирĕ:
Вăрăм шупăр та сăхман;
Кĕписем—шур кантăр пирĕ,
Тÿмисем те йывăçран.
Йăрăм-ярăм улачаллă
Çителĕклĕ çынсене
Чĕнтермен. Сăлтавĕ паллă:
Куланай хÿрисене
Тахçанах вĕсем тÿленĕ,
Çавăнпа вĕсен ӳтне
Чăпăрккан вĕçлĕ тÿлевĕ
Çунтармасть, сÿмест тирне.
Пÿрт хура та çĕтĕк-çарăк.
Тĕртсенех—тÿнсе каять.
Кив тăпрас çинчи сап-сарă
Вĕлтĕрен тата мăян
Çил çинче шавлаççĕ хытă.
Çавраçил чупса иртет.
Аякра ик-виçĕ йытă
Хамлатни илтĕнкелет.

Юнашар пĕр кӳршĕ аршăн
Килĕнчи килкартинче,
Вĕçсĕр-хĕрсĕр куланайшăн
Хур Сухал çук çынсенчен
Пухса хупнă ушкăн сурăх
Макăрать хутран-ситрен.
Лăпкă кун. Юрлаççĕ юрă
Тăрисем çеç пĕлĕтре.
Шăрăхри çанталăк уçă,
Кăн-кăвак янкар хирте.
Çул çинче вĕçет сар çулçă,
Хĕртнĕçем хĕвел хĕртет.

---

Уçăлĕ-ши пĕчĕк алăк?
Мĕн пĕлтерĕ Хур Сухал?
Хăнана кĕтнĕ пек халăх
Кĕтрĕ пысăк хурлăха.

---

Хур Сухал тата тăвать
Ял çынни—çĕрме пуян.
Шăп лараççĕ пилĕк ватă.
Черккесем çеç ян та ян.
Пӳрт хура, тăпра урайлă,
Хăрăмлă пĕренисем.
Алăран алла пĕр майлă
Хускалаççĕ куркасем.

— Халĕ каснă чĕрĕ хулă
Çитĕ-ши?—тет Хур Сухал—

Ĕçĕр те хăватлă пулăр,
Хĕртмелли паян çур ял.
Астăвăр, Сунар Михалĕ
Пĕр сумне те тӳлемен.
Хытă парăр, систĕр халĕ,
Хирĕçейме ӳлĕмĕн.

Тавтуса тăвата вата
Ыр сунаççĕ Сухала:
— Питĕрех тĕрĕс тăватăн,
Пит аван тытан яла.

Яранса черкке çӳрерĕ.
Хĕрĕнчĕç. Пурте хавас.
— Икçĕр хулă хатĕр!—терĕ
Алăка уçса пĕр сас.

---

Уçăлчĕ те пĕчĕк алăк,
Тухрĕ ӳсĕр Хур Сухал.
Ларакан шăпланнă халăх,
Çĕтĕк-çурăк пĕтĕм ял
Ним чĕнмесĕр, шавламасăр,
Тарăхса та хăраса
Кĕшĕлтетрĕ, тăпăр-тапăр,
Сиксе тăчĕ харăсах.
Пĕр хăлаç тăршшĕ ӳт-пӳллĕ
Хур Сухал каçăрăлсан,
Курăнать пӳртрен те çӳллĕ.
Вăл пăртак тăрсан-тăрсан,

Куҫхаршн вăрманĕ айĕн
Алтăр пек куҫĕсемпе
Чăх-чĕп мурĕ—хĕрен кайăк
Пĕлĕтрен тĕпчене пек
Пăхрĕ те:—Вулатпăр, итлĕр,
Халăх!—терĕ, пăрăнчĕ.
Хытканрах та тиншĕм писсăр
Хăйăлгиллĕ пырĕнчен
Сурнă хыççăн ручка хучĕ
Тăрнаккай халхи çине,
Аршăн тăршшĕ список хучĕ
Йăтăнчĕ ури патне,
Чылайччен вуларĕ камăн
Миçе сум тӳлессине,
Тепĕр хут систерчĕ тамăк
Çер çинче те пуррине.
— Тух кунта, Сунар Михалĕ!—
Çухăрчĕ те Хур Сухал
Килекен çынна:—Сахал и
Тӳлесси? Кала, кахал!—
Терĕ вăл, çеклерĕ алă,
Пĕр тыттарчĕ хăлхинчен,
Шăлапир çĕтĕк сăхманлă
Хуп-хура лутра хресчен
Тайăнчĕ, анчах ӳкмерĕ.
Хур Сухал тата тепре
Урипе тапсан, тӳсмерĕ,
Каснă йывăç пек тӳрех
Вăркăнчĕ, пăхрĕ мăнтарăн

Кăн-кăвак пĕлĕт çиве,
Хĕрелсе тăртанна тарăн
Çырăрах куçĕсене
Çурĕ тап-таса куççулĕ.
— Хулă пек эмел сахал,
Макăрмĕ, хавассăн кулĕ.
Çапăр!—терĕ Хур Сухал.
Сăхманне хывса ик вата,
Ӳсĕр куçлă куштансем,
Хулăсем тыта-тыта та
Ăш канмаллăх ислетсен,
Шăл çыртса Сунар Михалĕ
Юнлă сурчăкне сурсан,
Пурпĕр сывă, вăйлă халĕ,
Пурпĕр тăчĕ вырăнтан,
Курчĕ хытă йĕплĕ хулă
Хăй пек юрлă çынсене
Пилĕк тăрăх, çурăм урлă
Сăтăл-çатăл вĕтнине.
Тӳсĕмлĕ Сунар Михалĕ!
Сахалах асап тӳсмен,
Çав-çавах алри вăй-халĕ
Ăвнă хулăм пĕкĕсем
Пĕкĕлме тата Чистайăн
Хушшинче, утсем çинче
Мухтанса питех те лайăх
Иртнине курать хальччен,
Янăрать илем парасшăн
Шăнкăр-шăнкăр шăнкăрав,

Хĕрлĕ пиçиххиллĕ ямшăк
Юрттарать те шăхарать.
Чатăмла Сунар Михалĕ!
Вăрăм çеç ĕмĕрĕнче
Нÿхрепсем чавни сахал-и
Çарăмсан таврашĕнче?
Тимĕр кĕреçе те хусăк
Аллине сахал тытман,—
Вăл кăларнă тарăн пусă
Нихăçан начар пулман,
Тар тăкса ĕçленĕ, янă
Кашнинех юман пура,
Яланах çăлтăр вылянă
Куç пек çутă пусăра.

---

Куланай тесе Михалĕн
Киленчи вак-тĕвекне
Турттарса сапатрĕç халĕ
Тăйлăк-тайлăк пÿрт умне:
Самавар, сар çу чĕресĕ,
Тÿшекпе ик виç минтер.
Хĕнени çитмен. Чĕнмесĕр
Çурт йĕре кĕрет мĕн терт.
Лекнĕ шурă йĕтĕн пирĕ
Хур Сухал ури айне.
Хыт ухтарнă. Кашăк-тирĕк,
Вăл та куланай шутне.
Хăварман. Мĕскер тăватăн?
Лăшт усать Михаль пуçне.

Пунеттей çынни, пĕр ватă,
Çавăтнă качакине.
Унăн хыççăн каллĕ-маллĕ
Чупкалать пĕчĕк ача,
Селĕп чĕлхипе йĕркеллĕн
Йăлăнса ыйтать ачаш.
Вăл, Михаль ачи, Микихвĕр
Качака хăлхисенчен
Çакăнса пăхать:—Ан тивĕр,
Манăн—тет, куçĕсенчен
Сăрхăнса юхать куççулĕ,
Ашшĕне текех чĕнет.
— Качаки тепре те пулĕ.
Чарăн, ыльăм—текелет
Вилес пек хурланнă ашшĕ,
Кулянçи пек хăтланать.
Ывăлне Михал ачашшăн
Çавăтса килне утать.

---

## 3. ВЫРТМАРА

Сарлака та тикĕс уйăн
Çийĕ хăрăм пек хура
Сăнлăччĕ. Сап-сарă уйăх
Еррипен çурри таран
Йăтăнса хуллен хăпарчĕ,
Çывăрнă вăрман çинче
Йăлтăркка çуттин хăвачĕ
Кĕмĕл сăнлă курăкчĕ.
Хăмăшри пĕр ушкăн карăш
Вĕçсĕр-хĕрсĕр улăха
Çывăрма памасть, пĕр харăс
Авăтать те çуйăхать.
Чăмăр питлĕ уйăха
Шыв çинче çапса ватаççĕ
Кăвакал çунаттисем.
Утсенпе çынсен ӳкеççĕ
Çухрăм тăршшĕ мĕлкисем.
Сăрт çинче выртма вучахĕ,
Ут капанĕ евĕрскер,
Ялкăшать, хĕлхем йăлхахĕ
Татăлса кĕскен кĕскен
Ярăнать те йăлтăр-ялтăр
Вĕçнĕ чух çӳлте сӳнет.

Пĕлĕтре çап-çутă çăлтăр,
Çич-çич çăлтăр куç хĕсет.
Хĕрĕнсе лăпкă лараççĕ
Ачасем вучах тавра,
Умлăн-хыçлăн калаçаççĕ
Ĕлĕкрех, аваллăхра
Пулнисем пирки те, халăх
Сĕм вăрман чăтлăхĕнче
Пурăнни те Хур Сухалăн
Пысăк мулĕсем çинчен.

Хур Сухал тарçи, пĕр каччă
Пĕлтерет чăнни çинчен:
— Пирĕн асатте калатчĕ,
Виръялсен таврашĕнчен
Килнĕ Хур Сухалăн ашшĕ,
Чухăн пулнă, апăрша.
Çамрăк чух лаша таврашĕ
Вырăнне хăла ашак
Кӳлнĕ, тет,—ăна пĕр пушкăрт
Панă-мĕн парне туса,
Килĕнче кăркка пĕр ушкăн
Пулнă, çăп-çăра тусан
Вĕçтеркеленĕ. Тайлăк пӳрчĕ
Ларнă ялăн вĕçĕнче.
Ăнсăртран Чистай улпучĕ
Пĕр каç аслă çул çинче
Хирĕç пулнă та, ăна
Хур Сухалăн сĕмсĕр ашшĕ,

Мăкла мăнтăр такана
Пусна пек, нумай укçашăн
Пусна,—çавăнтан вара
Хур Сухал йахĕ-тавраш ĕ
Пуйна пирĕн таврара,
Хурăнлăх кăмпи пек хăвăрт
Ӳснĕ, мулла пулна, тет.
Паян кун, куратăр хăвăр,
Икĕ хутла виç кĕлет...
Калаçу питех те сапăр
Тăсалать хуллен-хуллен.
Вучаха тип-типĕ çапа
Пăрахаççĕ, çулăмсем
Вăркăнса çӳле чупаççĕ.
Ачасем кĕл ăшĕнчен
Çĕрулмийĕ кăлараççĕ,
Уйăраççĕ çурринчен,
Кăшт тăвар сапсан,—пит тута
Тăрантать сĕткен улма.
Вучахри кăварла çута
Ту çине те айлăма
Саралать, вăрман та улăх
Кăнтăрти пек курăнать,
Сĕрĕшсе хăпарна тулăн
Пучаххи çуталкалать.
Вăрăмтунасем нумайăн
Явăнаççĕ çутăра.
Макарна пек услан-кайăк
Ĕсĕклет ăвăслăхра.

— Тăпăртăк пĕрре тăвар-и,
Ташласа илетпĕр-и?—
Терĕ те шăхлич каларĕ
Хурарах ачи, пĕри.
Ыттисем те унăн хыççăн
Тутапа чĕтĕретсе,
Кашăка çапса та уççăн
Харăсах кĕвĕлесен,
Сиксе тăчĕ Микихвĕр,
Сăхманне хывса вара
Сирпĕнчĕ татти-сыпписĕр
Ташласа вучах тавра,
Пĕр ларса та пĕр тăрса
Кустăрма пек кускаларĕ,
Йăлтăр-ялтăр ялкăшса
Икĕ вутпуççи кăварĕ
Унăн икĕ аллинче
Çулăмланчĕ.
Иртрĕ ташă.
Палăрать ирхи тĕнче.
Вилнĕ пек хыт çывăрасшăн
Ырнă çамрăк ачисем
Пĕр шăналăк пĕркенеççĕ.
Улăхра кăвакалсем
Нартлатса хуллен вĕçеççĕ.

---

Çамрăк шухăшсем пĕр вĕççĕр
Хумлă-хумлă килнĕ чух,
Пĕр пĕччен кăна Микихвĕр

Тӗлӗрмест, ыйхи те ҫук.
Вӑл кӑштах, пӑртак пуясшӑн,
Вӑл тупасшӑн ырӑ ҫул.
Хур Сухалӑн ӗлӗк ашшӗ
Ҫын пусса туяннӑ мул.
Унӑн ахалех паян
Таврӑннӑ чухне сасартӑк
Ҫул ҫинче ҫеҫ ӑнсӑртран
Тупасси килет те, алӑк
Уҫсанах, хӑй ашшӗне
Тыттарасчӗ пысӑк енчӗк,
Пӗчӗк селӗп шӑллӗне—
Пӗр пӗремӗк те ӳкерчӗк.
Пуйсанах, лартасчӗ ҫурт,
Урине усса ларасчӗ
Сак ҫине, сӗрсе сар ҫу
Шур кулач чӗлли тытасчӗ,
Куккӑшӗ патне кайма
Ут илесчӗ—каҫӑр пултӑр,
Ирхине вутсем касма
Пулмалла тата пӗр пуртӑ.
Кирлӗ мар нимех те урӑх.
Тӳпене пӑхса чылай
Ушкӑн ҫӑлтӑра вӑл сурӗ.
Шучӗ ҫук, ытла нумай.
Килчӗ те илемлӗ ыйӑх,
Хупрӗ куҫ хупанкине.
Кӗмӗл тенкӗ пек ҫут уйӑх
Пытанать пӗлӗт айне.

## 4. ТЕЧУК

Пысăк та Чистай пасарĕ,
Пăтранать те кĕр кĕрлет.
Пуставпа читса таварĕ
Аршăн вĕççĕн чĕрĕлет.
Тутарсем утсем сутаççĕ,
Сулласа аллисене.
Хăмăшсем пекех аваççĕ
Лашисем мăйĕсене,
Чупнă чух çилтен те уçă
Кайнипе çулсем çинче
Варкăнса юлать сар çулçă,
Йĕс таканĕ айĕнче
Йăлтăрти вутсен хĕлхемĕ
Пĕрхĕнет те пĕрхĕнет,
Юланут çинчи этемĕн
Хăлхине çил вĕтелет.

Пасарта Сунар Михалĕ
Куçхарши пек авăнчăк
Пĕкĕсем сутсан, вăй-халĕ
Хĕпĕртерĕ, савăнчĕ,
Ачисем валли кулачă,

Пурçӑн тутӑр арӑмне
Илчӗ, ярмӑрка хӑвачӗ
Чаплипе илемлине
Асӑрхас тесе уттарчӗ
Шавлӑрах вӑта çӗре,
Чышакан тата мухтанчӑк
Çынсене сире-сире
Пынӑçем нумай вӑл курчӗ
Укçасем вылянине,
Акрамат хупахӑн çурчӗ
Çынсемпе тӗркӗшнине.
Алчӑрарӗ унӑн куçӗ:
Пӗр çын пылчӑк ашӗнче
Сывӑрать, саланнӑ çӳçӗ
Пӗр кӳленчӗк шыв çинче.

Кӗркунне çанталӑк сивӗ,
Питсене те хӗретет.
Ӳсӗр хӑй, тумтирӗ кивӗ,
Чӑннипех шӑнса вилет.
Чӗркуççи вӑйӗ-хавалӗ
Пуррине пухса, ӑна
Çӗклесе Сунар Михалӗ
Тӑратсан, тинех тӑна
Кӗчӗ те кайма хӑтланчӗ,
Ӳчӗ сиввӗн туртӑнчӗ,
Пылчӑк шывӗ юхса анчӗ
Çӳçӗпе сухалӗнчен.
Шеллӗ кӑмӑл пуррипе,

Çук, Михаль ямарĕ, чарчĕ,
Чĕркесе чаппанĕпе
Урапи çине вырттарчĕ.

Хытă сывăрсан, вăранчĕ.
— Ахалех вилеттĕн халь.
Ăçталли енсем эс, анчăк?—
Терĕ тарăхнă Михаль.
— Эпĕ-и? Аксу тавраше.
Вилеймен пĕр вата чун.
Ан ятла мана, тархасшăн.
Эпĕччĕ ялти течук.
Хамăрăн пуппа пĕрре
Çапăçсан, мана алхапăл
Сирпĕнтерчĕç чиркӳрен.
Килĕм çук. Кунçулăм япăх.
Йытсене хăва-хăва
Танккаса çӳретĕп халĕ...
— Пĕлкелен-и çырăва?—
Тет ăна Сунар Михалĕ.
— Шултăра çырсан, вулатăп.
Çыркалатăп,—тет течук.
— Лар эппин! Яла пыратăн.
Хут пĕлен тĕк, кирлĕ чун —
Терĕ те Михаль, сӳс пушă
Явăнчĕ лаша çинче.
Хыçалтан чăлпар хăрушă
Шĕвĕ пылчăк сирпĕнчĕ.

Пур енчен те пилӗк аршӑн
Сӗрӗмлӗ хура пӳртре
Пухӑнна пур кӳршӗ-аршӑ.
Вӑрӑм ҫеҫ кӗрхи ҫӗре
Юмахсем ярса пуш-пушӑ
Ирттерме ахаль килмен,
Чӗлхене сӳсе пур-ҫукшан
Йӑпатма кӗшӗлтетмен,
Хут курман чӑвашӑн ялӗ
Вӗренме шутлать кучух,
Ҫавӑнпа Сунар Михалӗ
Илнӗ-килнӗ пӗр течук.

Чылаях тавлашнӑ майӑн
Урлӑ-пирлӗ харкашсан,
Кӳршӗн аршӑран нумайӑш
Килчӗҫ пӗр пек канаша,
Вулама тата ҫырмашкӑн
Вӗрентсен ачасене,
Хӑтӑлма пулать пит аскӑн
Йӗкӗлти тиексене
Яланах ҫукран харамӑн
Хут тавраш ҫыртарнинчен.
— Патшана ҫыратпӑр хамӑр—
Терӗ пӗр лутра хресчен.

Ватӑ ҫын течук Ананий
Макариҫ ӗҫсе-ҫисен,
Уҫӑлӗ, пӑртакҫӑ канӗ,

Паллашсан, вӑй-хал илсен,
Вӗрентме тапратӗ, пуҫлӗ
Тепӗр кун-и е ыран,
Пӗр ача пуҫне хак пулӗ
Уйӑхне пӗр пӑт ыраш.
Ялӑн вӗҫӗнче пӗр ишек,
Ҫӗрӗк пӳрт ларать—унтан
Чухӑн хуҫипе кил-йышӗ
Тӑранма тырри ҫукран
Кӗркунне кӑҫал саланчӗҫ—
Кӗлӗмҫӗ, ыйткалакан.
Икӗ чӳречи те ванчӑк,
Алӑкне пӗр ҫын такам
Хайӑрнӑ. Пӳрт ӑшӗ юрлӑ.
Хӑмисем ҫитмест маччан.
Юсасан, вӗренӗ, юрлӗ
Кӗшӗлти ача-пӑча...

---

## 5. ТĂЛĂХ ПӲРТРЕ

Пӳрт хура, тăпра урайĕ,
Шĕкĕ çинĕ пĕрене.
Кĕнĕ чух аяллăн тайăл,—
Унсăрăн пуç перĕнет.
Сивĕ çĕр шăнтать шур юрлă,
Çăпаталлă урана.
Çăвартан тухать те сывлăш
Пăсланни те курăнать.
Юпасем çинчи пĕр сакă,
Хăмаран туни çинче
Пĕтĕмпе те çичĕ-сакăр
Пĕчĕкçĕ ача касчен
Пугене пекех хăравçă
Пăхкалаççĕ пуç чиксе,
Кĕнеки тăрăх чупаççĕ
Кĕсенленнĕ пӳрнесем.
Яш юман çулçи çăпанĕ
Шывĕпе пусса çырсан,
Шурă хутăн икĕ енĕ
Хуралать мĕн сăрхăнсан.
Çӳçенет иккен Ананий,
Вагă çын та ватă юн.

Ĕлĕк çурăмĕ-каçанĕ
Ун шăнман, кĕлтунă кун
Чиркӳре çурта çутни те
Ăшăтнă иккен ăна,
Ылттăнлланă тумĕ витĕр
Юхнă унăн тар кăна.
Кĕрĕкĕ çинчен сăхман
Тăхăнсан та халĕ унăн
Ватă ӳчĕ ăшăнман,
Çурăм тăрăх сивĕ шунă.
— А текен пукку вăл акă—
Тет вăл, кăмака çине
Йыт пырши пек кукăр-макăр
Саспалли кĕлеткине
Кăмрăкпа çырать, кахаллăн
Хăйăпа чĕрсе тăкать:
Ааа... тесе пĕр аллă
Хут та пулĕ кăшкăрать.

---

Ирхине Ананий килчĕ,
Хĕп-хĕрлĕ куçĕсене
Вылятса пăхса пĕр илчĕ
Шавсăр ачасем çине.
Кĕсъинчен пĕр-ик икерчĕ
Кăларса çикелесен,
Кăмака çине ӳкерчĕ
Кĕрепле пек паллăсем;
Ывăнсан, кĕрĕк ăшне
Сăмсине чиксе вăраххăн

Ларчӗ, ӑрттӑн эрехне
Тутанма васкарӗ ахӑр.
Ҫырнине пӑсма хӑтланче,
Тайӑнчӗ ӳкес пекех,
Урисем айне хутланчӗ
Хӑй ӳкерне кӗнеке.
—Тух кунта, Микихвӗр,—терӗ,
Хӑйӑпа чӗрсе тасат!—
Каллӗ-маллӗ хӑй ҫӳрерӗ,
Пускаларӗ пӑт та пат.
Хӑйӑпа тасатнӑ хыҫҫӑн
Кӑмака хӗрелнине
Курсанах, ӳпне шур куҫлӑн
Пӑхрӗ те куҫхаршине
Антарса усал Ананий
Хӑлхинчен Микихвӗре
Ҫутӑлтарчӗ: Эс кулан-и?
Шур тӑмне чӗре-чӗре
Пӗтерсен, ӑҫта эп ҫырӑп?—
Терӗ, ҫиленсе каллах:
— Чӗркуҫҫи ҫинче сан ырӑн!
Лар та лар, тӑрӑ ухмах!—
Хушрӗ, кӗрӗкӗ ӑшне
Сӑмсине татах пытарчӗ,
Антӑхрӗ те эрехне
Кӑхӑл-кӑхӑл пӗрхӗнтерчӗ.
Ҫӑмӑл тӑчӗ, кӗрӗс-мерӗс
Ташласа сиккелесен,
Савӑнни ӑна ҫитмерӗ,

Чиркӳри пек юрӑсем
Мĕкĕрсе нумай юрлуҫӑн
Ыванчĕ, ҫапкаланса
Ӳсĕрскер ҫӳренĕ хыҫҫӑн
Персе ӳкрĕ, харлатса
Илчĕ те вӑл, вилнĕ евĕр
Ҫывӑрчĕ урайĕнче.

Йӑл кулса, хӑвӑрт Микихвĕр
Тӑчĕ чĕркуҫҫи ҫинчен.
— Тӳсмелле-и ват течукӑн
Мӑшкӑлне? Пĕлмен чухне
Тылласа илер пĕр чуххӑм!—
Тет Микихвĕр, чышкине
Чӑмӑртарĕ, хӑпӑл-хапӑл
Ҫурӑм тӑрӑх ислетме
Тытӑнчĕ. Ун хыҫҫӑн хапӑл
Ыттисем те хĕнеме
Пуҫласан, течук вӑранчĕ.
Йӑпӑр-япӑр ҫеҫ чупса
Килелле тарса ҫухалчĕ
Шакӑр-макӑр ачапча.

---

Тепĕр кун Микихвĕре
Кӑмака умне ҫырмашкӑн
Кӑларсан, лӑпкӑ ҫеҫ пĕрех
Хӑлхинчен туртса:—Ан ашкӑн,
Малашне эп пулӑп урӑ,
Кӑнтӑрла вĕрентнĕ чух
Нихӑҫан та ĕҫмĕп урӑх—

Терӗ тарӑхнӑ течук.
Ачасем куллен йӗркеллӗ
Итлесе тӑлӑх пӳртре
Темӗн те пӗр кӗлеткеллӗ
Кӗнеке тӑрӑх хитре
Вулама хуллен вӗренчӗç,
Кӑтартма ашшӗсене
Ӳкереççӗ ир ӳкерчӗк
Пӑрлӑ чӳрече çине,
Каçхине тӑвайккине
Ярӑнма вӗсем каяççӗ,
Чӑкӑт пек кӗртсем çине
Хулӑпа чӗрсе çыраççӗ
Пӗр-пӗрин ячӗсене.

---

Çӳл тусем, сӑртсем хура мӗн.
Çитрӗ ырӑ çуркунне.
Кӑларать иккен хур амӗш
Сар чечек пек чӗппине.
Сар хӗвел çӳле çӗкленчӗ.
Çӗр те ӗнтӗ вӑрӑм мар.
Ешӗл те сенкер пӗркенчӗк
Пӗркенет хура вӑрман.
Кирлӗ мар пӳрте вут-шанкӑ.
Çутçанталӑк хӗрнӗ май
Çӗр çине тухать кӑпшанкӑ —
Хӗрлӗ тумлӑ кукамай.
Кайӑксем пуçлаççӗ юрӑ
Шурӑ çӗмӗрт айӗнче.

Ӑтра ҫӑмлӑ путек-сурӑх
Сиккелет ҫерем ҫинче.
Тӑрисем илемлӗ саслӑ
Шӑратаҫҫӗ пӗлӗтре.
Ачасем сиксе хавассӑн
Чупкалаҫҫӗ сӳрере.

———

## 6. ВĔЧĔ

Ирхине ирех пуçларĕç
Мăръесем мăкăрланма.
Типĕ вутăн шĕл кăварĕ
Хĕрсенех, хăна тума
Пиçрĕ тутлă апат-çимĕç
Çуллă çатмасем çинче.
Килчĕ аслă ырă çимĕк,
Çавăнпа пичкесенче
Кăшăла татас пек вирлĕ
Йӳçнĕ сиплĕ пыл-сăра
Мĕкĕрчĕ, хăмла пĕрчиллĕ
Хăватне пара-пара
Çăпала çинче чашларĕ,
Кĕреке таврашĕнче
Алăран алла çӳрерĕ,—
Аслă çимĕк эрнинче
Сыпсанах, никам та ура
Юлаймасть ун йӳççинчен.
Чăвашсем юрлаççĕ юрă
Пӳртсенче, урамсенче.

---

Хур Сухалăн йывăр мухмăр,
Куçĕсем те хĕрлĕрех.

Ӑнана яла вӑл тухмӗ,
Умӗнчех ларать эрех.
Юнашар течук Ананий
Сарлака сӗтел умне
Ларнӑ та, вӑл савӑнман-и,
Пысӑк хурӑн тукмакне
Тытнӑ, тутинче ҫап-ҫутӑ
Сӑрхӑнать пӑтранчӑк ҫу.
Ӳсӗр те тата вӑл тутӑ,—
Ирӗлет ҫеҫ калаҫу.

Течук

Ватӑ супнӑ, ҫӗтӗк-ҫатӑк
Вилмелле ухмах пуҫа
Чӗннӗшӗн хисеп сунатӑп,
Тавтапуҫ сире, хуҫа!

Хур Сухал

Ваттисем пӗлсе каларӑш:
Катӑк пуртӑ ӗмӗрте
Кирлӗ пулнӑ; каҫӑр карӑш
Шӑпчӑксем пулман ҫӗрте
Авӑтсан, илтме илемлӗ,
Юрӑ пек туйӑнкалать.
Ман ҫурта тата килеймӗн,
Халӗ пултӑн—ҫав юрать.
Эсӗ, ватӑ мур илесшӗ,
Ман ялтан урусене
Аякка хӑҫан илесшӗн,

Е аяк пĕрчисене
Ватасса кĕтме шутлан-и?
Çавăнпа анчах киле
Чĕннĕччĕ сана, Ананий.
Ăнлантар. Пĕлес килет.

Течук

Халăха сиен таврашĕ
Кӳрес çук ĕмĕтĕмсем.
Чистайран Микихвĕр ашшĕ
Йыхăрса илсе килсен,
Хĕл хушши вĕрентрĕм эпĕ
Ялăрти ачасене.
Вĕрентесчĕ манăн тепĕр
Çул хушши çеç вĕсене.

Хур Сухал

Ку та çитĕ. Хамăн ялăн
Киленче пĕр кĕнеке
Вулакан тата суялăх
Сăмахне пĕр итлекен
Ан та пултăр! Кĕнекесĕр
Иртнĕ ĕмĕр, чарăнман.
Каялла пăхмасăр эсĕ
Тасалма ыран ан ман.

Течук

Çын тени телейлĕ кайăк
Йăлипе тăранаймасть:

Ăçталла тухса эп кайăп?
Ватă хул хускалаймасть.
Ырă çын, тархасшăн шеллĕр
Çуртсăр-йĕрсĕр тăлăха...

Хур Сухал

Хурама йывăç тӳмеллĕ
Çĕтĕк-çурăк халăха
Вĕрентетĕн, урлă-пирлĕ
Тăрататăн хирĕçле.
Тăранма апат-и кирлĕ?
Хĕрĕх хĕлĕхлĕ кĕсле
Туянатăн та Чистайăн
Кĕрлекен пасарĕнче
Юрласа çӳренĕ майăн
Ыйткалатăн çынсенчен.
Çăмăл ĕç, сассу сан пур,—
Хушăран юрлатăн юрă.

Течук

Пысăк намăс та хĕн-хур.
Ыранах уттарăп... Юрĕ.

Хур Сухал

Кайиччен, Ананий, маншăн
Пĕр ĕç илĕн ху çине.
Кирлĕ вĕт çăкăр-тăваршăн
Тавтуни те хуçине.
Çăкăр çырт, тупа туса
Тай пуçна, вара пĕлтерĕп.

Течук

Сирĕншĕн, хуçа, тусан
Пулайса вĕçме те хатĕр.
Çăкăра çыртса çут уйăх
Умĕнче ак ман тупа,
Чăн сăмахăм. Эпĕ суйăп,
Ун чухне вут çулăмпа
Ман чуна çунтартăр тамăк.

Хур Сухал

Ху каланă сăмахран
Ниçталла та пăрăнаймăн,
Иртес çук усаллăхран.
Кĕçĕрех Сунар Михалĕн
Çурт-йĕрне тĕртетĕн вут.
Хăрани пĕтсе çухалĕ,—
Сыпкала-ха тепĕр хут.

Течук

Аслă çылăх... Ах, каçарăр...
Çын çуртне чĕртессĕм çук.
Тамăкра хĕрӳ кăварăн,
Вată чунăм, çун та çун.

Хур Сухал

Пăрăнаймăн! Хĕнесе
Ыранах сана ташлатăп,
Патшана хурлать тесе

Старшина патне ăсатăп,—
Шăмшакку çĕрсе саралĕ
Тупăкри пек тĕрмере.

Течук

Пĕтĕм ялăр тĕрĕс калĕ:
Уçă та таса чĕре.
Пĕр сăмах нихçан та хирĕç
Каламан эп патшана.
Çынсенчен ыйтсан та—хӳтлĕç
Çылăхсăр мĕскĕн чуна.

Хур Сухал

Хурламан, çапла, Ананий.
Суйăп та ман сăмаха
Старшина юлташăм шанĕ,
Сан пек ватă ухмаха
Сăнчăрлĕ,—вара ăсанăн
Аякка та Çĕпĕре.

Течук

Ăсансан та, чунăм манăн
Лайăх юлĕ ĕмĕрех.

Хур Сухал

Вут тĕртетĕн, унсăрăн
Сарлака килкартинче
Çурăм тăрăх сăтăрăп,
Тулаттарăп йытсенчен.

Течук

Туласан, пӳ-си суранĕ
Иртĕ, çĕнĕ ӳт татах
Еррипен ӳссе хупланĕ.
Çын çуртне чĕртсе ята
Çухатни ытла хăрушă,
Йрсĕр ĕç, усал тĕнче.
Вут тĕртме мана ан хушăр,
Тулаттарăр йытсенчен.

Хур Сухал

Тулаттарăп та çуртарăп.
Пулăн юнлă, йĕп-йĕпе.
Вĕлерме пăрахăп тарăн,
Сивĕ пăрлă нӳхрепе.
Çурăлас пек питĕ хытă
Ĕçрĕн-çирĕн те çитет.
Сăнчăрти тăвата йытă
Мухмăрна уçма кĕтет.
Картишне тухар, ухмахăм!

Течук

Çылăх çапрĕ ват пуçа.

Хур Сухал

Вут тĕртме тивет-мĕн ахăр.

Течук

Юрĕ, юрĕ, ыр хуçа...

---

Аслă урамра хаваслă,
Шур кĕпеллĕ çамрăксем
Сĕм-хура çăра йăмралăх
Айĕнчен хуллен иртсе
Картипе юрланă юрă
Улăх тăрăх янраса
Сарăлса каять, хĕн-хурăн
Чĕрене чикет касса.
Юлашки çак вăйă-кулă
Çутă уйăх айĕнче
Хĕпĕртет, кайран салхуллă
Тăсăлать вара тĕнче.
Çимĕк хыççăн яш сухаçă
Пăвансен сĕрленинче
Тарăхса утать, çĕр-касăн
Урапийĕ айĕнче
Çыврăрать, çиет мăнтарăн
Типĕ çăкăрпа уйран,
Вăл кĕтет пиççе сап-сарă
Пуласса ыраш уйра.

---

Чаршавланчĕ шурăмпуçĕ.
Лăпланать вăйă юрри.
Янратса питех те уçă
Автансем шăри-шари
Çухăраççĕ. Уйăх харсăр
Шурă акăш пек çӳлте
Ярăнать те чарăнмасăр
Ушкăн-ушкăн пĕлĕте

Сиркелет. Çил вĕрнĕ майăн
Саланать шупка тĕтре.
Чĕвĕлти пĕччен саркайăк
Йăпанать çĕмĕртлĕхре.
Купаларĕ типĕ улăм
Аслăк хыçĕнче течук,
Чĕртрĕ те алхаснă çулăм
Шавласа хăпарнă чух,
Васкаса тăват уран
Упаленчĕ те çухалчĕ.
Унăн хыççăн хуп-хура
Йӳçĕ тĕтĕм мăкăрланчĕ.

—— -

## 7. ИНКЕК

Кăварланнă вут хăвачĕ
Сиккелерĕ йăлт та ялт.
Хĕрелсе ĕнтĕ çуталчĕç
Пĕлĕтсем. Вăранчĕ ял.
Ушкăн-ушкăн кăвакарчăн
Çуйăхса çӳле хăпарчĕ,—
Чĕпписем йăвисенче
Ĕннине сиссе пĕр майăн
Каллĕ-маллĕ явăнчĕ.
Айăхлă çынсем нумайăн
Аслă ял урамĕнче
Йăпăр япăр, тăпăр-тапăр
Кăлараççĕ пурлăха,
Систермесĕр ал-урасăр
Килекен çак хурлăха
Пĕлеймесĕр антăраççĕ,
Шалт хытаççĕ аллисем.
Пăсланаççĕ, çурăлаççĕ
Пыл-сăра пичĕкисем.

Вăйлă çил тухса сасартăк
Çурçĕртен çĕр çумĕпе

Хуп-хура тусан, кăвар та
Вĕçтерсе тулашнипе
Кÿкĕрт пек ялкăшăнса
Ак Сунар Михалĕн çурчĕ
Çăмăллăн тата ансат
Пĕр самант хушши çеç çунчĕ,
Хурхуххи пек çулăмсем
Çиçĕм пек вĕçсе йăр-ярăн
Çурт-йĕрсем çине ÿксен,
Улăм витнĕ кивĕ ялăн
Пурлăхĕ çак йывăр çул
Пĕтессе инкек систерчĕ,
Хăвăртах çурт хыççăн çурт
Йăсăрланчĕ те хĕмленчĕ.
Йĕрекен çынсен сасси
Чĕрене çурса çÿçенчĕк
Илтĕнет. Çунса кĕлленчĕ
Ял çурри, Вăта касси.
Чăрсăр çут тĕнче хаярĕ!
Вичкĕн çил улшăнса
Кăнтăртан вĕрме пуçларĕ,
Кустăрма пек çаврăнса
Вăркăнчĕ, вут купине
Силлесе ял тăрăх шурĕ,
Çеçкери çĕмĕртсене
Амантса çăмăр пек çурĕ.
Ват йăмралăх хушшинчи
Хур Сухалăн аслă çурчĕ
Каç хĕвеланăçĕнчи

Пĕлĕтсем пек хĕрлĕ пулчĕ.
Йышлă выльăх тухрĕ ĕнтĕ
Ирĕк аслă урама.
Аякран ĕнтет пулин те,
Ватă вăкăр çулăма
Сÿнтерсе таптас пек вирлĕ
Чĕтретсе мăйракине
Нар пек хĕрлĕ вутпуççиллĕ
Хапхаран килкартине
Кĕрсе кайрĕ, чупкаларĕ,
Макăрнă пек мĕкĕрчĕ.
Пысăк çулăм ыталарĕ,—
Ĕннĕ шăрăш сарăлчĕ.

— Течука тытасчĕ, халăх!
Çавăн ĕçĕ – çунасси!—
Янтăрарĕ Хур Сухалăн
Аслати пекех сасси.
Халăх пĕлчĕ хăй асапĕ
Камăн кукăр аллинчен
Тухнине, шеллемĕ, çапĕ
Çич юта вĕлериччен,
Кĕллетсе ăна вĕçтерĕ
Сарă хупахсем çине.
Вут сÿнсен те, кам сÿнтерĕ
Хурлă халăх çиллине?
Пилĕк-ултă çын алхапăл
Çавăтса, хĕне хĕне
Илсе килчĕç питĕ сапăр

Течука Ананине:
— Хӑвӑнпа пӗрле усал ӗҫ
Кайтӑр уҫӑ ҫил ҫине!—
Терӗҫ те ӑна пӑрахрӗҫ
Шӗл кӑвар вучаххине.
Кӑнтӑрла ҫитес чухне
Ват йӑмраллӑ аслӑ ялӑн
Чаплӑ мулӗ вырӑнне
Сайрарах хура юпаллӑ
Вырӑн юлчӗ. Ял кӗперӗ
Ӳкнӗ. Антӑхать ҫӑвар.
Ҫил ҫинче ҫеҫ вӗҫкелерӗ
Каллӗ-маллӗ шӗл кӑвар.

Хуп-хура та аслатиллӗ
Ҫумӑр шывӗ пӗрхӗнсен,
Сӳнчӗҫ тин тӗтӗм шӑршиллӗ
Пӗрене татӑкӗсем.
Ял ҫинче кашлать хӑрушӑ
Вӑйлӑ ҫумӑр каҫченех,
Лӳшкетсе шӑнтать пуш-пушӑ
Ҫуртсӑр-йӗрсӗр ҫынсене.
Пухӑнать кӳленчӗк шывӗ
Ачасен сӑпки ҫинче,
Ашкӑнса чупать-ҫке сивӗ
Хурлӑ ҫыннӑн ӳчӗнче.
Хӗҫ пек ҫутӑ харсӑр ҫиҫӗм
Хӑмӑр пӗлӗт хушшинчен
Сирпӗнсе тухса вӗҫӳҫӗн

Ярӑнать пуҫ тӑрринче.
Инкесем ҫӳҫӗсене
Салатса та турамасӑр,
Ҫумӑр шыв лӳшкетнине,
Ҫиҫӗм ҫиҫнине пӑхмасӑр
Тайӑнаҫҫӗ, ыталаҫҫӗ
Кӑмрӑклӑ юпасене,
Хурланса куҫҫуль тӑкаҫҫӗ
Шӑп кӗлленнӗ ҫӗр ҫине.

Каҫхине, ҫумӑр иртсен,
Ҫынсенчен вӑрттӑн Микихвӗр
Течука тупас тесе
Ҫӗр ҫумне выртса пӗр вӗҫсӗр
Чылайччен чавса шырарӗ
Хур Сухал выранӗнче.
Тӑрӑшсан та вӑл курмарӗ
Нимӗскер те кӗл ҫинче,
Ыратма пуҫларӗ куҫӗ
Ирсӗр йӳҫӗ тӗтӗмре.
Тупрӗ пӑхӑр чӗлӗм пуҫӗ.
Сӑмсинчен вӗре-вӗре
Унка тӗтӗм кӑларатчӗ,
Хыт туртатчӗ ват течук,
Чӗлӗмне ҫапса шаккатчӗ
Ачасем шавланӑ чух.
Кам вӗрентӗ-ши? Куҫҫулӗ
Сӑрхӑнчӗ Микихвӗрӗн.
Каҫ ҫап-ҫутӑ. Ҫурҫӗр ҫилӗ

Вӗркелет кӑшт сивӗрех.
Ҫӑлтӑрсем йӑл-ял пӑхаҫҫӗ
Кӑн-кӑвак тӳпе ҫинчен.
Выртмари пекех ҫунаҫҫӗ
Вучахсем урамсенче.

---

## 8. САВРĂШ-ПУÇĔНЧЕ

Кĕркунне. Çăралнă уçăм
Аякра кăвакарать.
Çул çинче сап-сарă çулçă
Çиле май кустарăнать.
Çап-çара çанталăк хушнă
Сулхăн вăхăтсем çитсен,
Виç кĕтеслĕ ушкăн-ушкăн
Тăрнасен картийĕсем
Ăсанса юрланă юрă
Чĕрене çӳçентерет,
Малашне çăвас шур юрăн
Сиввине вăл систерет.
Яланах шăнса каç-ирĕн
Тăм ӳкет те ирĕлет.
Сарăхса вăрман тумтирĕ
Лăстăр-лăстăр вĕçкелет.
Ирхине ирех пăч-пачăн
Сайрарах пĕччен-пĕччен
Илтĕнет хуллен тăпачă
Тӳнклетни анкартинче.
Кĕлленсе çухалнă ялăн
Хуп-хура вырăнĕнче

Вырăсла хăма хапхаллă
Çурт-йĕрсем çу хушшинче
Лартакан çынсем сахаллăн
Тупăнчĕç иккен кăçал.
Çуннă хыççăн Хур Сухалăн
Банкăра пин-пин укçа
Пуррине пĕтĕм ял курчĕ:
Киввинчен те чаплăрах
Тимĕр витнĕ çĕнĕ çурчĕ
Çичĕ çухрăм аякран
Курăнса хăвăрт хăпарчĕ,
Уншăн иртрĕ хур-инкек.
Хур Сухал пуян хăвачĕ
Иксĕлмен, чакман иккен.
Харсăр çын Сунар Михалĕ
Шĕшкĕрен çавра çатан
Аврĕ те, ăшши пулкалĕ,
Улăм хушнă тăмпалан
Хытă шăлчĕ, касрĕ алăк,
Лартрĕ пĕчĕк чӳрече,—
Пӳрт те пулчĕ ăшăнмаллăх
Шартлама хĕл варринче.

---

Вунвиççе çитсен те пурпĕр
Виçĕ çухрăм инçерех
Халиччен тухман Микихвĕр
Янăравлă шăн çĕре
Юр ӳксен, така шăрттанĕ,
Çăнăх чикрĕ хутаçне,

Куккăшпе ытти тăванĕ
Пурăнан Саврăш-пуçне
Ашшĕпе пĕрле уттарчĕ.
Çул çинче чупкалакан
Пилĕк-ултă кăвакарчăн
Тĕлпулсан:—Ĕç ăнакан!—
Терĕ ашшĕ ывăлне,
Кулнă пек çуталчĕ куçĕ.
Кăнтăрла çитес чухне
Улăх ялĕ Саврăш-пуçĕ
Ват йăмралăх айĕнче
Чаплă пек пулса çĕкленчĕ...
Куккăш сĕтелли çинче
Тутлă туйăнчĕ икерчĕ.

---

Ирхине çĕнĕ çап-çутă
Хыр çуртра вĕрентекен
Чи малтан питех те тутă
Çинĕ евĕр тек-текех
Тутине çуллана хыççăн
Ӳсĕрчĕ, пуçне усса
Сăмаха татса та уççăн
Еррипен çеç вырăсла
Калама пуçларĕ. „Турă“,
„Иисус“, „Ерусалим“
Сăмахсем чупаççĕ, урăх
Пĕр чĕптĕм таврашĕ ним
Ăнланмасть иккен Микихвĕр,
Тарăхать те тарăхать.

Хăть те макăр, хăть те йĕр,—
Ӳчĕ-тирĕ тăрăхах
Шиклĕх чупрĕ. Ларнă вырăн
Йĕплĕ пек чикме пуçлать.
Ăнланса ăçтан-ха пырăн?
Вырăсла-çке, вырăсла...

Каçхине, урок пĕтсен,
Лайăх тумлисем нумайăш,
Çут тӳмеллĕ ачасем
Тавтуса калаçнă майăн
Сарлака сĕтел çине
Хăшĕ тутлă пыл чĕресĕ,
Хăшĕ тип хур какайне
Хăвараççĕ, пĕшкĕнмесĕр,
Пуç таймасăр иртекен
Курăнмасть, пурте хаваслă.
Вата пуп-вĕрентекен
Йышăнать, сĕтелĕ аслă.

Ачасем, пуян таврашĕ,
Урамра Микихвĕре
Малтанхи кунах хурласшĕн
Хупăрларĕç пĕр çĕре,
Пилĕк-улттăн йăвантарчĕç
Тин çеç хунă кĕрт çине,
Ахăлтатрĕç, юр тултарчĕç
Çурăмпе ĕнси хыçне.
Тепĕр кун кая Микихвĕр

Пулчĕ те сĕтел çине
Хучĕ хăй çимен пĕртен-пĕр
Пуç пек пысăк шăрттана:
Аттепе анне сире
Ячĕç хапăл кучченеçĕ—
Тесшĕнччĕ, пĕр вĕççĕрех
Урипе алли чĕтреççĕ,
Çыхăнна чĕлхи калаймĕ,
Вăрлани пекех вăтанчĕ,
Çамкинче сив тар тумламĕ
Ярăм-ярăм шăрçаланчĕ.

Çиленсе вĕрентекен
Уткаларĕ, уçрĕ алăк.
Ĕççĕр-хĕлсĕр вĕрекен
Йыттине ик шурă алă
Ачашларĕ. Пысăк йытă
Хыпрĕ унăн шăрттанне.
Тарăхрĕ Микихвĕр хытă,
Чараймарĕ куççульне.
Йĕркипе кун хыççăн кун
Тăсăлчĕ татти-сыпписĕр.
Тăрăшса итлет, ун-кун
Шутламасть, çапах Микихвĕр
Ăнланмасть, хăй ашшĕ вырăс
Пулсанах, епле ăна
Вĕренме пулатчĕ ырă—
Текелет те кулянать.
— Охотников, тăр-ха—терĕ

Çухăрса вĕрентекен.
Мĕн ыйтсан та, вăл пĕлмерĕ.
Çапсанах, пĕçерекен
Чăмăрĕ ват супнă пупăн
Хытă мĕн, Микихвĕре
Çуталтарчĕ виçĕ çупă.
Чĕркуççи айне çĕре
Пуп юри пăрçа саптарчĕ.
Пĕçерет пăрçа, чикет.
Çав-çавах Микихвĕр ларчĕ
Сахалтан та пĕр сехет.
Тавраннă чухне урамăн
Варринче Микихвĕре
Яштака ӳт-пӳллĕ самăр
Ачасем пере-пере
Суллантарчĕç те пĕр-икĕ,
Картара та хӳтĕре
Сар автанăн киккирикĕ
Шăннă урнă сивĕре
Юр çине тĕртсе ӳкерчĕç,
Иккĕн икĕ уринчен
Çĕтĕрсе ăна çӳрерĕç
Йăнăшса макăриччен,
Кустарса çăмха пек ячĕç
Чăнкă тарăн çырана.
Ӳксенех, юрпа хупланчĕ,
Аялти çал шыв ăна
Сывлама хăват памарĕ.
Сиксе тăчĕ—йĕп-йĕпе.

Сивĕ çил вĕрме пуçларĕ,
Пăрланать çири кĕпе.
Тепĕр кун шур куçĕ пупăн
Ирхинех ун çийĕнче.
Çутă çурт вĕр-çĕнĕ тупăк
Пулнă пек питех кичем
Чĕрене касса хăрушă
Туйăнать Микихвĕре.
Хутсене ĕне пăрушĕ
Чăмласа пĕтертĕрех!—
Шухăшлать паян Микихвĕр.—
Ăнланмастăп, ан та çуп,
Килĕме каятăп пурпĕр.
— Охотников- терĕ пуп,—
Хывăх пуç, паян мĕн калăн?
Ак Микихвĕр вăрканчĕ.
Уçăлчĕ чăпталлă алăк,
Кĕрĕс-мерĕс хупăнчĕ.
Вăл утать. Сукмак тумасăр
Пытанать йĕр утăмăн.
Йăнăшать усал та харсăр
Кутсăр-пуççăр çил-тăман.

———

## 9. ÇУЛ ÇИНЧЕ

Кантӑкран пӑртакçӑ çутӑ
Кӗрсенех, сиксе тӑрать,
Савӑнса касать вӑл вутӑ,
Хӑй чӗлет те юр хырать.
Лашине утланнӑ хыççӑн
Чӗлпӗрне вӑл шухӑрах
Турткалать, питех те уççӑн
Шӑлӗ витӗр шӑхӑрать,
Шарлакан çӑлшыв валакӗ
Умӗнче шӑварсанах,
Аллинче юман тукмакӗ —
Пысӑк кисӗп вӑркӑнать,
Сӳс тӗвет, каçа турашӑл
Кирлӗ унӑн амӑшне,
Çуркунне вӑл тӑхӑнасшӑн
Йӗтӗн пирӗн кӗпине.
Ярӑнма кайсассӑн, çӳллӗ
Ту çинчен çӑмӑл çуна
Шилесе анать те вирлӗ,
Пичӗ çил çинче çунать.
Каçхине пӳртре хура мӗн.
Хӑйчикки çутти начар.

Çип арлать Микихвĕр амĕш,
Чупкалать йĕки вăр-вар.
Çип арлать, юмах-халлапĕ
Тăсăлать. Иван ухмах
Пуранна, пулман хисепĕ,
Тупнă ылттăн урхамах.
Аллинчи хĕçĕ Иванăн
Çичĕ пăт—çĕкле кăна!
Çĕлене Иван туранă,
Тухнă пысăк патшана.
Юмахсем юхаççĕ вĕççĕр.
Автансем те хушăран
Аватаççĕ. Иртрĕ çурçĕр.
Ашшĕ килчĕ пухуран.
— Юмахсем аван пулин те,
Çывăр, ывлăм, лайăх кан.
Чĕмпĕре каятпăр ĕнтĕ
Ирхине ирех ыран...

Çул çинче ĕнер çанталăк
Сивĕ марччĕ те уяр.
Алсаран ан тухтăр алă,—
Чĕпĕтсе касать паян.
Хуп çунан йĕлме тупанĕ
Чăйлатса çӳçентерет.
Шуралать тăла чаппанĕ,
Юр пĕрчи чĕлтĕртетет.
Вăрманти нумай çеç йывăç
Хуçăлнă-мĕн, йăтайман —

Ут капанĕ пек пас йывăр.
Çурăлать шăнса юман.

Вырăнта ан лар, ан тĕлĕр!
Хыçалтан пĕр май чупать
Ашшĕпе пĕрле Микихвĕр,
Аллине çăт-çат çупать.
Йывăççем çинче ăсан та,
Ĕнерхи пек курăнмасть.
Асапа сиссе тăрсан та,
Килчĕ-çитрĕ ирсĕр каç.

Хĕрелсе хĕвел ту урлă
Пытанса çеç ĕлкĕрсен,
Çĕкленеççĕ шурă юрлă
Хутлă хутлă пĕлĕтсем.
Капкăна çакланнă кашкăр
Йăнăшнă пек çил улать.
Çынсене инкек тумашкăн
Юр вĕçет, тăман тухать.
Чылаях Сунар Михалĕ
Пурăннă, чĕри сисет:
Тем инкекĕ кӳрĕ халĕ;
Çил-тăман çаплах кĕрлет.
Астăвать, Ӳсел этемĕ
Нарăс умĕн иртнĕ çул
Чистая кайма тухса мĕн
Аташса çухатнă çул.
Юр кайсассăн, тупрĕç унăн

Кайăк çинĕ виллине.
Хăй айне тӳшек пек хунă
Çĕлĕкне те кĕрĕкне.
Шăнна çын йӳтет мĕн ахăр,
Мунчари пек хывăнать.
Сивĕ çил хĕрӳ вучахăн
Туйăнать иккен ăна,
Аллине хĕртсе вăл шухă
Ахăрса кулать иккен...
Михаля хăрушă шухăш
Хĕсĕрлет, кĕтет инкек.

Каллĕ-маллĕ, пăлтăр-палтăр
Çавăрать усал тăман,
Сывлама çынна памасăр
Ӳкерет те ураран
Çитмĕл çичĕ вăр-хурахăн
Çухăрать те ахăрать,
Хăшпĕр чух вăрах-вăрахăн
Ăссăр çын пек шăхăрать,
Хыçалта, малта та нимĕн
Куç пăнчи те курăнмасть.
Эх, мĕскершĕн эсĕ килтĕн,
Чунилли хăрушă каç?..
Арăш-пирĕш вилĕм каçĕ
Чĕрене шари çурать.
Пĕлĕтсем те курăнмаççĕ...
Çутçанталăк хуп-хура.
Пуç çинче çилсем улаççĕ

Урăм-сурăм тавлашса,
Çул шырать, хуллен пăртакçă
Каннăçем утать лаша.

Тарăхнă чĕре пĕр катăк
Татăлнă пек тулашать.
Урине тапса сасартăк
Шăппăн чарăнчĕ лаша.

Çунинчен Сунар Михалĕ
Анчĕ те тилхепине
Пĕр енчен вĕçерчĕ халĕ,
Тытрĕ салтнă çав вĕçне—
Çавăн пек вĕрентнĕ ашшĕ
Ĕлĕкех, ача чухне,—
Унсăрăн таçта аташĕ,
Тупмĕ хăйĕн çунине,
Вилесси те питĕ çывăх—
Аташтарĕ çил-тăман.
Утнă чух пĕр пысăк йывăç
Çапăнчĕ. Кунта—вăрман.
Лашине кӳртсе тăварчĕ,
Ӳплентерчĕ çунине,
Улăм хучĕ те вырттарчĕ
Ывăлне çуна айне.
Шиклĕх иртрĕ, вырăн хӳтĕ.
Канмалли те халĕ пур.
Сĕм вăрман турачĕ витĕр
Алланса ӳкет сив юр.

Кавлекен лаши тавра
Нумайччен вăл уткаларĕ.
Ерripeн пыра-пыра
Тутлă ыйхă хупăрларĕ:
Сăтăрать питне юрпа—
Вăхăтсăр ыйха юр уçĕ.
Пулăшмасть иккен, çапах
Хупланать ун ырнă куçĕ.
Аптăрарĕ те таянчĕ
Пĕр ăвăс çумне, анчах
Çывăрса кайса йăванчĕ.
Ут çиет. Этем ачаш.
Юр çинче шăнса та кайăн...
Кĕмеллех çуна айне.
Ăшă мĕн, пўртри пек лайăх.
Вăл пĕркенчĕ чаппанне...
Вăл вăранчĕ. Питĕ хытă
Çывăрас, выртас килет.
Инçетре мар ик-виç йытă
Вĕрнĕ сасă илтĕнет.
Пур вăйпа тĕртсен те—пурпĕр
Хускалмасть çаплах çуна.
Çил-тăман кашланă кĕçĕр,
Юр хупланă-мĕн ăна.
Хăрамасть Сунар Михалĕ,
Сăвăр шăтăк алтнă пек
Аллипе юра чавалĕ,
Шăпăр пек сухалĕпе
Шăтăкне шăлса тасатĕ,

Тухĕ, тухĕ юр ҫине,
Чĕмпĕре утне васкатĕ,
Ҫавăрĕ тилхепине.
Тухрĕ вăл мала пăхмашкăн,
Юрлă шăннă куҫ-пуҫне
Шăлнăччĕ, тăватă кашкăр
Харлатса ун лашине
Ҫинине тĕлпулчĕ. Юлнă
Хĕлĕхĕ те шăммисем.
Умĕнчи юр кĕрчĕ юнлă.
Тарчĕҫ сăрă кашкăрсем.
Кун уяр. Ăшă ҫанталăк.
Вăхăт ҫитнĕ кăнтăра.
Тĕтĕмĕ паллах пĕр ялăн,
Йыт сассийĕ янăрать.

Каҫăр ҫыхнă туртана
Хайăрса туртса кăларчĕ,
Ҫавăрчĕ хуп ҫунана,—
Ывăлĕ тинех вăранчĕ.
Ăслă чун, лаша мăнтарăн
Ҫулсăр-мĕнсĕр хир ҫинче
Утнă, пилĕк ҫӳллĕш тарăн
Ҫеп-ҫемҫе кĕртсем ҫинче
Ывăннă, таҫта ҫын ялĕ
Пуррине, ун шăршине
Сиснĕ вăл, ҫитмен вăй-халĕ
Пĕр-ик ҫухрăм тăршшĕне.
Ывăлпе Сунар Михалĕ

Тухрĕç йывăç айĕнчен.
Курăнать пĕр вырăс ялĕ
Мăръесен тĕтĕменче.
Кунĕсем кĕске Кăрлачăн.
Вĕретсе, сĕтел çине
Сăмавар майра тăхлачă
Лартиччен, чӳречине
Хĕретсе хĕвел вылярĕ.
Ăшă кăмака çинче
Тĕлĕкре асран каймарĕ
Ĕнерхи усал тĕнче.
Ирхине Сунар Михалĕ
Ăсатать хăй ывăлне,
Кăкăрне витен сухалĕ
Пăрлантарчĕ куççулне.

— Вуник çухрăм юлнă, ывлăм,
Çитĕн аслă Чĕмпĕре.
Канлĕ çӳрĕн, кулăн, вылььăн,—
Лайăх пул вĕренӳре!..

## 10. ЧЁМПЁР

Пĕр хула курман Микихвĕр
Аслă Атăл хĕрринче
Сарăлса пĕр вĕççĕр-хĕрсĕр
Çӳллĕ лăпкă ту çинче
Ларакан нумай пусмаллă
Чаплă Чĕмпĕр хулине
Кĕрсенех, темле хаваслăх
Тулчĕ çамрăк чĕрине.
Çуллахи пекех илемлĕ
Урамри тап-такăр çул.
Хĕрĕх-аллă чӳречеллĕ
Виçĕ хутлă пысăк çурт
Сар хĕвел çинче çап-çутă
Курăнать. Ай-хай тĕнче!
Алчăрать кунта куçу та
Хулари илемсенче.
Хĕрлĕ тилхепеллĕ лавçăн
Шур çамкаллă икĕ ут
Пуç сулса чĕвен юртаççĕ.
Ватă çын—кервен улпут
Сар сăран çуна çинче
Пашкаса ларать, тӳп-тӳрĕ

Таракан ун çухинче
Пас хуплана хăнтăр тирĕ...
Пасартан иртсе, пăртак
Кайсанах, хула илемĕ
Куçĕнчен çухалчĕ ак,
Тăвăрланчĕ ун урамĕ.
Пŷрчĕсем ват карчăк майлă
Чалăшнă, хăйсем лутра,
Хапхисем те тăйлăк-тайлăк,
Шăтăк-шатăк, хуп-хура.
Мăръерен кăларнă хăрăм
Пĕр çĕрте вĕçсе выртать.
Хăмăр ĕнине пĕр арăм
Кŷлнĕ те шыв турттарать.
Карăнать Сĕве кĕперĕ.
Лерелле каçсан—пĕр ял.
Çамрăк ачасен эшкерĕ
Тăрăс-тăрăс, йăлт та ялт
Чупкаларĕ кив хапхаллă
Хĕрлĕ çуртăн умĕнче.
Çамрăк халăх çăпаталлă,
Мулкач тирĕ—пуçсенче.
Вăл пĕрре те хăрамасăр:
— Пуçлăх пур-и?—тесенех:
— Килĕнче пулас директор—
Хытă уçă сасăсем
Янтăрарĕç урлă-пирлĕ.
Ертрĕ пĕр ача ăна,
Анкарти пек килкартиллĕ

Çӳллĕ мар чипер кăна
Çурт умне,—хуллен шаккарĕ.
Çын утни çеç пӳлĕмре
Илтĕнчĕ. Чĕри таккарĕ
Хăраса Микихвĕрĕн.
Тухрĕ хуп-хура сухаллă
Вата мар пĕр çын, яштак:
— Вĕренме кĕресшĕн, паллă.
Инçетрен-и, этак так?
Хушамат мĕнле, тăванăм?—
Терĕ вăл.
— Аксу енчен.
Хушамат тени вăл манăн—
Охотников. Ял çинче
Аттене Сунар Михалĕ,—
Теççĕ. Чухăнрах эпир...
— Сунара çӳрет-и халĕ,
Капкăнсем пăхать-и ир?
— Ахалех кулса калаççĕ,
Ĕмĕрте аттеçĕм ман
Нихăçан пулман сунарçă,
Кăвакарчăн та тытман.
Хамăр кӳршĕри ял пупĕ,
Вăтăра çитсен, ăна,
Кĕлтуса пĕтсессĕн, хупă
Чиркӳри пĕр каткана
Сив шыва чăмтарнă, панă
Охотников хушамат.
Çиелтен пирпе хуплана.

Ăшă шыв хăрушă мар.
Çиччĕре чухне мана
Ăшă шывлă каткана
Янине те астăватăп.
Пупĕ вăрăмччĕ, хăй вată.
— Охотников, халĕ кан,
Калаçса кайран пĕтерĕн.
Ирхине сана ыран
Пулмалла çăмăл экзамен,—
Терĕ те кĕчĕ директор.
Охотников савăнса
Чупрĕ каялла пăхмасăр
Ачасем патне ансат.

---

Каçхине вăл çутă курчĕ,
Аптăрарĕ, тĕлĕнчĕ.
Çĕрĕк йывăçăн çут хурчĕ
Выртмара вăл каçсенче
Çĕлĕкĕ çине лартатчĕ,
Курăнатчĕ вăл хаяр.
Кун пек япала курманччĕ,—
Çулăмĕ илемсĕр мар.
Каллĕ-маллĕ вăл çӳрерĕ.
Çук, сӳнмест, çунать анчах.
Мĕн, айван-и эсĕ?—терĕ
Асăрханă пĕр ача,—
Вăрманта эс ӳснĕ ахăр—
Хăй кулать, ихĕлтетет.

— Эс ан кул, мана кала-ха,
Тĕлĕнтермĕш çутă!—тет
Охотников, хăйĕн пичĕ
Вăтанать те хĕрелет.
— Лампа ятлă, лайăх питĕ,
Çунасси шалтан килет.
Шыв пекех çăвĕ пур унăн,
Çăвĕн ячĕ—кăраççин.
Сан пуçна мĕн хывăх хунă.
Ха, çапах та тĕксĕм çын
Вĕренме килме шутланă—
Тет ача, кулать юри.
— Их, чĕлхӳ чараксăр санăн,—
Хирĕçле калать тепри—
Килĕнтӳ çĕрме пуянлăх
Пĕлтермест ăса, Ваçлей!
Лампăсем çутса лармаллăх
Хăшсене тивмен телей.
Чи малтан тиек ялта
Пĕлтĕр лампа çутрĕ пирĕн.
Пĕтĕм ял çав каç йăлтах
Арăш-пирĕш, урлă-пирлĕ
Тем курман асар-писерĕн
Пухăнчĕ, черечĕпе
Хĕсĕнсе икшер-виçшерĕн
Кĕркелерĕç, пӳрт йĕпе.
Пирĕн ял пуянĕ уншăн
Сутнă виç хитре лаша—
Пĕлтерет тепри. Ун хыççăн

Калаçаççӗ тавлашса
Лампа çутнисем çинчен.
Туйӑнать суя юмахӑн.
Ачасем калаçнинче
Тӗрӗсси те пур-тӑр ахӑр.

## 11. ПУП

Хăратса тăран экзамен
Иртрĕ унăн çăмăллăн.
Кустăрма пекех телей-мĕн
Чуптарать çеç малалла.
Халь утса иртесчĕ унăн
Инçетри хăй ялĕнче,
Мухтанасчĕ хурлăх тунă
Хур Сухалăн умĕнче;
Тантăшсен умне пырасчĕ,
Курăнасчĕ пит ăслăн,
Шăкăл-шăкăл калаçасчĕ
Такăнмасăр вырăсла,
Чĕнтĕрлĕ Чĕмпĕр кĕперĕ,
Çӳллĕ ту çинчен пăхсан,
Атăл урлă чип-чиперĕн
Асамат пек карăнса
Тăсăлни çинчен каласчĕ,
Шавлă пысăк уллахра
Сарă мăйăрсем катасчĕ
Тусĕсемшĕн çурмаран.

---

Уроксем пулас çеç умĕн
Ачасем пĕрмай хальччен

Кĕрмешетчĕç çийĕ-тумĕ
Тусанне вĕçтериччен,
Хурт-хăмăр пек сăрланă шавĕ
Янтăратчĕ ян та ян.
Халĕ шăп кăна. Сăлтавĕ
Пысăк та усал: паян
Вĕрентме пуçлать, тет, имĕш
Виçĕ аршăн çӳллĕш пуп.
Аллинчи туйи ун тимĕр,—
Çăварна ан кар эс, хуп!
Шăнкăрав кĕрлерĕ. Алăк
Еррипен çеç уçăлчĕ.
Чи малтан çăмланнă алă
Кĕрепле пек курăнчĕ.
Алăк янаххи мĕн ансăр,
Тĕртĕнеççĕ хулĕсем.
Утаман упа пек харсăр
Хĕрлĕ тĕслĕ куçĕсем
Сĕм хура çăра вăрманлă
Куçхаршийĕ айĕнче
Ырнă пек питех кахаллăн
Каллĕ-маллĕ явăнчĕç.

— Пĕлĕтре хăватлă турă
Пулмасан, çĕр çийĕнче
Пулмĕччĕ нимле культура,
Тырăсем уй-хирсенче
Ӳсмĕччĕç—тесе пуçларĕ
Темĕскер те калама.

Пуланни пекех ҫаварĕ
Сарлака та акрамат.
— Ӑнланма тен йывăр мар-и,
Тен илтмен-и ĕлĕкех?—
Терĕ вăл, анчах пулмарĕ
Ӑна хирĕҫ чĕнекен.
— Тăр, кала!
Шап-шурă питлĕ
Пĕр ача хăранипе:
— Ӑнланатăп эпĕ, илтнĕ—
Пӳлĕх тура вăйĕпе
Ҫĕр ҫинче ҫӳретпĕр—терĕ.
Ҫыхланать чĕлхи, пĕтет.
Ал-ури сиксе чĕтрерĕ,
Пичĕ вут пек хĕрелет.
— Аслă туррăн пур-и юнĕ?—
Ыйтрĕ пуп.
— Пулмасăр, пур.
Питĕ лайăх, мункун кунĕ
Ӗҫсенех, иртет хĕн-хур.
— Тăмана, тĕнче ухмахĕ,
Ҫĕтĕк-ҫатăк хытă хуп,
Чиркӳри пылак эрех-и
Тура юнĕ?—терĕ пуп,
Тинкерсе хăруша куҫлăн
Пăхрĕ те ыттисенчен
Ыйткаларĕ, унăн хыҫҫăн:
— Ларăр чĕркуҫҫи ҫинче!—
Тапрĕ, уринчи ҫут аттăн

Пуҫӗ яр ҫеҫ ҫурӑлчӗ.
Пӗтӗмпе ачсем тӑваттӑн
Юлчӗҫ парта хушшинче.

Чӗркуҫҫи ҫинче йӗркеллӗ
Шӑп лараҫҫӗ ачасем.
Ним чӗнмесӗр каллӗ-маллӗ
Пуп утать те, аттисем
Таклатни кӑна хӑрушӑ
Илтӗнет те илтӗнет.
Вилнӗ евӗр пӳлӗм пушӑ.
Пӗр ачан ури ҫине
Те юри, те ӑнсӑртран
Пуп таптать. Ача чӑтмарӗ,
Куҫҫулленчӗ чи малтан,
Ахӑрса йӗрме пуҫларӗ—
Ыттисем те унӑн хыҫҫӑн,
Йӗрсе ячӗ пӗтӗм класс.
Макӑрать-ҫке кутсӑр-пуҫсӑр
Ҫил-тӑман пек ушкӑн сас.
Урине тапса нумай вӑл,
Виҫӗ аршӑн ҫӳллӗш пуп,
Кӑшкӑрчӗ. Анчах чараймӑн,
Хӑлхӑна сыхла та хуп!
Чӑн-чӑнах та чикрӗ мамӑк.
Охотников савӑнать:
Паянхи пуп панӑ тамӑк
Лекеймерӗ-ха ӑна.

Вăрманта хитре уçланкă.
Хумханаççĕ чечексем.
Чĕлхене тивсе пылакăн
Ирĕлеççĕ çырласем.
Ăнсăртран кăвак сухаллă
Виçĕ аршăн пуп упа
Пулнă та тăват уораллă
Упаленчĕ те чупать,
Хăй асав шăлне кăларчĕ,
Урăм-сурăм мĕкĕрет,
Урипе çапса ўкерчĕ
Тарайман Микихвĕре.
Хăй упа, çапах та унăн
Аллинче пур кĕнеке:
— Пĕлмесессĕн, эсĕ çунăн,
Çийĕп—тет вĕрентекен.—
Турă юнĕ пур и?—тет.
Охотников пĕлеймерĕ.
Пуп чăнах та хĕпĕртет,
Хăлхине çиме пуçларĕ.

Охотников çурçĕрте
Чăм тара ўксе вăранчĕ,
Тĕлĕкре пулса иртен
Асапа пĕлсен, хăвачĕ
Тин çĕкленчĕ те чĕри
Талпăнса тапмарĕ урăх.
Çывăрман ача пĕри
Пуççапса калать: „Эх, турă!

Хӑтарсам ҫылӑхсенчен,
Пӗлмелли ялан телейӗм
Пултӑр пупӑн умӗнче.
Турӑмҫӑм, мана шеллейӗр,
Хӳтӗлӗр мана хӑвӑр,
Ҫав усал пупран хӑтарӑр,
Парӑр ирӗкпе хӑват.
Ӗмӗрне ыр ятӑр юлӗ...“
Сӑхсӑхать вӑл, кӗлтӑвать.
Уйӑх ҫуттинче куҫҫулӗ
Йӑлтӑр-йӑлтӑр тӑкӑнать.
Нумайччен ӑна итлерӗ
Охотников. Эх, тӗнче!
Кам юпкурӗ, кам хӑтарӗ
Вӗсене пуп аллинчен?..

---

## 12. ĔМĔТСЕМ

Ачасен пĕрре каçкӳлĕм
Пулчĕ пысăк тавлашу:
Вĕренсе тухсассăн, ӳлĕм
Камăн кам пулма пур шут.
— Тиекрен те лайăх вырăн
Урăх пулмĕ—тет пĕри—
Çывăрать, акмасть вăл тырă.
Хуйхăсăр ялан чĕри.
Çыркалать хуллен пăртакçă,
Ун çапах та мулĕ пур—
Лавĕпе çынсем параççĕ
Кăвакал та пиçнĕ хур.
— Ырă мар ĕçĕ тиекĕн—
Тет тепри, Ваçлей ятли—
Куланай пухаймăн—лекĕн.
Пуп пулни чи хисепли.
Эрнине ик-виçĕ юрă
Юрласан, тӳшек çинче
Укçине шутлать, ĕç урăх
Курăнмасть ун умĕнче.
— Пуп тени ахаль харамăн
Пурăнать, усси те çук.

Пуп усал, тӳсетпĕр хамăр—
Хирĕçлет тепри, Тимук,—
Мĕн хисепĕ мăнтăр пупăн?
Çарататъ кăна яла.
Урампа иртет-и тупăк?—
Кантăкран пăхса ялан
Укçасем хырса илесшĕн
Шухăшлать, чыхать эрех.
Нӳхреп куçĕ пуп таврашĕн
Выçă ĕмĕр-ĕмĕрех.
Пуп пулас текен халь тухтăр,
Ан та тыттăр кĕнеке.
Ачасем, пуласчĕ тухтăр
Е аван вĕрентекен.
— Э, таса пупа хурласшăн,
Антихрист пулса пире
Мăйсене пăвса çакасшăн
Пысăк çылăх чĕлпĕрĕ—
Чăркăшма пуçларĕ паçăр
Пуп пулас текен Васлей.
— Нумайрах пуçна эс каçăрт,
Килтисем пуян, телей
Пулăшать сана, пуп пулăн,
Чиркĕве кĕре-кĕре
Юрласан, тăварлă пулă
Чăмласа ĕçĕн эрех.

Çиленме нумай-и кирлĕ
Ачана? Турти кĕске.

Чĕтренсе Ваçлей, хĕп-хĕрлĕ
Панулми пек питлĕскер,
Çăлăнна арлан пек çивчĕ
Талпăнса Тимук çине
Сикрĕ те, пĕр тĕркĕм илчĕ
Аллипе çалса çӳçне.
Иккĕш ӳкрĕç айлăн-çийлĕн
Çип çăмхи пек çаврăнса,
Хушăран çеç урлă-пирлĕ
Çапкалать Тимук ансат.
Вăй çитмест нăртти Ваçлейĕн,
Хăй çыртать те хăй йĕрет,
Кăшкăрать,—ачаш, чее мĕн—
Сăмсинчен юн сирпĕнет.
Питĕнчен юнне шăлмасăр,
Çĕлĕксĕр-кĕрĕксĕрех
Йăнăшса каять—директор
Ăс вĕрентĕ кĕçĕрех.
Чăн-чăнах, Ваçлейĕн ашшĕ
Элшелпе Пăва енче
Пыршă-аршăсем тавраш
Пуçтарать. Енчĕкĕнче
Янраса тăраççĕ унăн
Укçисем çăлшывĕ пек.
Килĕшӳ çырса ал хунă
Ĕрĕнпур хуçисемпе,
Вĕсемпе ларса юрланă
Сарлака сĕтел тавра,
Кăпăклă сăра выляна

Сарă сăрлă куркара.
Хусаин, Ёпхӳ тутарĕ,
Аксаккал, пуян агай,
Халĕ унăн тусĕ мар-и?
Хаклашса çӳренĕ май
Пĕлĕш пулнă, ĕçнĕ çинĕ.
Хусаин çак çулсенче
Уçнă пыршă магазинĕ
Чăн Парижăн варринче.

Ай та хай, Васлейĕн ашшĕ
Пухнă вăрăм пыршăсем
Парижра чапне сарасшăн
Кăлараççĕ шăршăсем.

Килкелет кунта та ашшĕ
Виçĕ ут кӳлсе ялан.
Вăл директорăн юлташĕ,
Паллă çын, çĕрме пуян.
Кучченеç нумай Васлейĕн—
Пăнтăхаççĕ хуплусем.
Шăпăр пек хăпартнă тейĕн
Нар пек хĕрлĕ пичĕсем
Пĕсехе пек курăнаççĕ.
Çывăрма выртсан ирччен
Апата сиссе чупаççĕ
Шăшисем ун патĕнче.
Васлейпе пĕрле директор
Килчĕ те сасартăках:

— Ыранах ялна! Ирех тăр!
Сирпĕн!—хушрĕ Тимука.

---

Тин кăна çиллес директор
Кайнăччĕ. Тимук пĕччен
Савăннă Васлей çинчен
Макăрнă куçне пăрмасăр
Пăхрĕ те хĕне пуçларĕ
Аллипе те урипе,
Сăмсине çапса юнларĕ
Аллинчи çăпатипе.
Урнă пек кулса пĕр-иккĕ
Унăн çурăмĕ çинче
Калаçмасăр хытă сикнĕ
Хыççăн çурçĕр тĕлĕнче
Хутаçне çакса мăнтарăн
Çĕтĕк-çатăк кĕрĕкпе
Ал памасăр вăл хастаррăн
Тухрĕ пысăк паттăр пек.
Эрнерен Тимук хыпарĕ
Çитрĕ аслă Чĕмпĕре:
Çитеймен килне—каларĕç—
Вилнĕ мĕскĕн сивĕре.

---

## 13. ÇУРКУННЕ

Çуркунне шавланă майăн
Ăшă та пĕлĕт кăвак.
Йăмрасем çинче нумайăн
Явăнать хура курак.
Иртрĕ ĕнтĕ сулхăн сивĕ,
Иртрĕ туй пек шавласа,
Васкаса чупать юр шывĕ
Юрăсем пек янраса.
Хĕллехи хаяр çанталăк
Сăнчăрне татать хĕвел.
Сăпкари пекех сасартăк
Çывăрнă лăпкă Сĕве
Çырана тулса хăпарчĕ,
Манчĕ тутлă ыйăха,
Тан тапса юхан шыв ячĕ
Аслă уçă улăха.
Пăр тумне ваклана хыççăн
Кашласа та сĕрĕшсе
Шыв хускалчĕ. Умлăн-хыçлăн
Вăркăнса пĕренесем
Çапăнсан, Сĕве кĕперĕ
Кĕрĕс-мерĕс чĕтренет.

Çуркунне тӗнчи чиперӗ
Чуптарать ачасене.

---

Ачасем апат тумашкӑн
Кӗрсенех столовӑйне,
Курчӗç йышлӑ кашӑк-чашӑк
Ярӑнса ишнисене.
Пуринчен те пысӑк тирӗк
Çийӗнче ула кушак
Вӗсене пӑхса ак хирӗç
Капитан пек пуш-пушах
Савӑнса хастаррӑн пычӗ,
Чӑтаймарӗ—макӑрчӗ.
Кӳлӗ пек столовӑй çурчӗ,
Хӑмӑш çеç çук хӗрринче.
Ачасем виç тавлӑк выçӑ,
Ыйӑх çук, вӑй-хал чакать.
— Тӳсӗр-ха, тӑранӗ куçӑр!—
Тет директор, йӑпатать.
Тутисем Ваçлейӗн çуллӑ,
Хур тукмакӗ çеç çиет,
Питӗнче илемсӗр кулӑ,—
Тӑрӑхлать те ихӗрет.
Хаяртан хаяр та выçлӑх
Чӗрене касса чӗрет.
Ун пекех хӑватлӑ пуçлӑх
Урӑх çук çут тӗнчере!..
Çук, пуян Ваçлей апачӗ
Пуррине пӑхса тӑма

Ачасен çитмест хăвачĕ,—
Çĕнтерейĕмĕн хырăма.
Вĕсенчен пĕри хупларĕ
Ваçлее пĕр сăхманпа,—
Арчара часах юлмарĕ
Пăнтăхнă нумай апат.
Ачасем хаваслă, тутă,
Иртрĕ выçлăхпа хĕн-хур.
Ваçлее юлмарĕ çутă
Пĕсехеллĕ пиçнĕ хур.
Макăрать Ваçлей. Хăраттăр!
Çинĕ ĕнтĕ чăн-чăнах.
Кăлармасть хаяр директор
Çирĕм виçĕ ачана.

---

Картипе кикак хуркайăк
Килчĕ, килчĕ ир те каç.
Йăмрасем кăтра та лайăх
Ешерсе çӳçне сараç.
Охотников илчĕ ĕнтĕ
Пилĕк пуслăх çăпата—
Тăхăнма атти пулмин те,
Савăнĕ çапах ялта.
Пысăк ун малти телейĕ,
Çӳремен вăл тĕк-тĕкех.
— Вĕренсе тухсассăн—тейĕ—
Пулăп хам вĕрентекен.
Аякра Чĕмпĕр кĕперĕ

Аслă Атăл çийĕнче
Кăн-кăвак тата чиперрĕн
Юлчĕ унăн хыçĕнче.
Ăсатса хумханчĕ Атăл.
Янкăр уçă ешĕл кун.
Аваттать унта, кунта та
Ярăнса чăпар куккук.

———

## 14. ÇĔМĔРТСЕМ ÇЕÇКЕ ÇУРСАН

Вайă-кулăра хаваслă
Шур кĕпеллĕ çамрăксем
Улăха янратнă саслăн
Юрласа кĕрленисем
Лăплансан, йăлт-ялт çиçетчĕ
Хушка çăлтăр ял çинче,
Шурăмпуçĕ те сӳнменччĕ,—
Халăх тăчĕ ыйхинчен.
Паллă ĕнтĕ, çимĕк кунĕ
Сирчĕ тутлă тĕлĕке.
Çурçĕртех яш-кĕрĕм кӳнĕ
Ешĕл хурăн милĕкĕ.
Çырмара нумай вут хутнă
Мунчасен кăмакинчен
Пăсланса шерпет пек тутлă
Чул шăршийĕ сарăлчĕ.
Сухара пулса ӳт-тирĕ
Ывăннă çынсем тем пек
Çăвăнаççĕ, хулăм кирĕк
Сĕвĕнтĕр! Урисемпе
Маччана тапса выртаççĕ
Сарлака лапка çине,

Çатăл-çатăл çапăнаççĕ,
Пăр пек сивĕ çăл шывне
Витрепе тулли яраççĕ
Çӳçенмесĕр пуç çине,
Эх, мухтаççĕ, шăрăшлаççĕ
Çамрăк хурăн çулçине.

---

Пухăнать тумланнă халăх
Анатран та тукасран.
Авланать мĕн Хурсухалăн
Кĕçĕн ывăлĕ паян.
Авланать тĕнче ухмахĕ
Вăтăрти ачаш ача,
Ун пуçне пахча хупахĕ
Çĕлĕк вырăнне анчах
Çĕлесе пырса лартасчĕ,
Кĕл сапасчĕ ун çине,
Тикĕтпе çырса хурасчĕ
Пĕр ӳкерчĕк çамкине.
Авланать мухтавлă каччă
Чаплă чалăш куç Иван,
Çиччĕре те утайманччĕ,
Çирĕмре чухне, айван,
Шарчăкпа шăна тытатчĕ,
Укăлча панче тăллатчĕ
Чăхсемпе кăрккасене.
Вăтăра çитсен, хăй ашшĕ
Килĕнчен те кăларман,

Кaçлăн ирлĕн йăпанасшăн
Çăл умне пĕчĕк арман
Лартнă мĕн. Тăпра силленĕ,
Ĕç тупăннă ухмаха,
Шур тăма çăрса чĕркенĕ
Măяна та хупаха,
Сурчăкпа сурса вăл кукăр
Çыпăçтарнă вĕсене,
Пĕçеркеленĕ имĕш кукăль
Çитерме пуканине.

Măшăрĕ пулать Иванăн!
Чипертен чипер хĕре
Ашшĕ, Хур Сухал, вăрланă
Çирĕм çухрăм инçетре.
Хур Сухалăн çурчĕ лайăх,
Хур Сухалăн мул нумай.
Кĕрĕс-кĕрĕс тапнă майăн
Силленет çеç хыр урай,
Çуй тăвасшăн, шав тăвасшăн
Силленет те силленет.
Шăпăр хыççăн кайнă ташă
Кĕрĕс-кĕрĕс кĕр-кĕрлет.
Çĕн кĕрӳ, ухмах сӳсленкĕ,
Мухтанать кĕрекинче,
Пашалу пек пысăк тенкĕ
Ун картусĕ çамкинче.
Тăпăр-тăпăр тăпăртатăр,
Пăхăр-ха та курăр-ха

Кĕмĕл тенкĕ çакнă харсăр
Виçĕ пуслăх ухмаха.
Алтăр умĕнче ухмахăн,
Саламачĕ—аллинче.
Хĕр йĕрет вăрах-вăрахăн
Шур пĕркенчĕк айĕнче.
Туй утать шап-шур кĕççеллĕ
Сарлака пусма çинчен.
Шăнкăрав сасси илемлĕ
Пĕкĕлме пĕккисенче.
Çĕн кĕрӳн, Сухал Иванĕн
Учĕ хирĕç сиккелет,
Чул çинче ун йĕс таканĕ
Вут та хĕм çеç сирпĕтет.
Çĕн кĕрӳн сар чĕн йĕнерĕ,
Çĕн кĕрӳн кĕрен кĕпе.
Вырăсла хапха кĕрлерĕ
Саламачĕ çапнипе.
Çул çинче тусан кăларчĕ
Çӳл кӳмеллĕ урапа.
Çĕнĕ кин йĕрри хупланчĕ
Урнă ӳсĕр юрăпа.

---

Иртрĕ ĕнтĕ шавлă çимĕк.
Иртрĕ пысăк пăсăк туй.
Тӳремсем çинче сип-симĕс
Хумханса хăпарчĕ уй.
Ирхине ирех Микихвĕр
Таврăнатчĕ выртмаран.

Шур тётре вěçě-хěррисěр
Хăпаратчě улăхран.
Ырă уçă çутçанталăк
Çумăр хыççăн тап-таса.
Савăнать хěн-хурлă халăх
Çěмěртсем çеçке çурсан.
Пухăннă çынсем нумайăн
Хур Сухалăн умěнче.
Çын вилли çил вěрнě майăн
Силленет йăмра çинче.
Мăшкăла тӳсмен мăнтарăн
Çěнě кин те ырă кин.
Малалла мěнпе мухтанăн,
Мулупа мăкланнă кил?..

## 15. УЛЬЯНОВ

Кĕркунне. Тăхлан пек хăмăр
Тĕслĕ курăнать тӳпе.
Кулленех пĕр вĕççĕр çумăр
Лӳшкетет. Тĕнче йĕпе.
Çил вĕрет. Эс, кĕр вăрманĕ,
Тумтирне çарат та хыв!
Нумаях тăмĕ, пăрланĕ
Ирĕкре шавланă шыв.
Çул çинче иртмест тыр лавĕ.
Кайăкхур картийĕсен
Илтĕнмест салхуллă шавĕ.
Тăлăх юлнă уй-хирсем.
Сайрарах çеç курăнаççĕ
Суратсем те çĕмелсем.
Анкарти тулли лараççĕ
Улт ураллă ĕçкĕртсем.
Охотников кассăн-кассăн
Çунă çумăр витĕрех
Икĕ кун утсан, хавассăн
Çитрĕ аслă Чĕмпĕре.

---

Малтанхи кунах пĕрремĕш
Сехетрех тĕл пулчĕ пуп.

Аллине лексен, шеллемĕ.
Ан калаç, сăлтав ан туп.
Хĕнесе пĕтерĕ ĕнтĕ.
Хăраса чĕре хĕрет.
Кĕрсенех тĕпчет: пурин те
Майĕнче пур-и хĕрес,
Кам ялта кĕлле çӳренĕ,
Ашкăнман-и чиркӳре,
Е лаша ашне çимен-и,
Пуççапман-и чӳкĕре.
Охотников сисĕнмесĕр
Юлаканччĕ, хальхинче
Лекрĕ вăл, пăхăр хĕресĕ
Унăн юлнă арчинче.
— Киремет тăванĕ, паллă,
Турăсăр, хĕрессĕрех!—
Терĕ пуп хуллен, кахаллăн,
Хăйĕнчен перет эрех.
Хăлхинчен тытса кăларчĕ
Ачасен умне мала,
Хытă тапрĕ, вăркăнтарчĕ:
— Урăх ан кĕр, кай яла!—
Охотников хыт чĕреллĕ
Пулаканччĕ,— чăтаймасть.
Кам ăна хĕрхенĕ, шеллĕ?
Иртĕ кăнтăр, çитĕ каç.
Вăл ăçта кайса тăранĕ
Çичĕ ютăн хушшинче?
Выçăхĕ, унтан йăванĕ

Сивĕ çумăр айĕнче.
Хулара ун тăлăх пуçăн
Йăпанас çĕрĕ ăçта?
Макăрать, сассийĕ уçă
Илтĕнет коридорта.
Хӳтлекен ăна кам пулĕ?
Ан кала та ан та çыр...
Кĕчĕ вăтамрах ӳт-пӳллĕ
Хуп-хура тумтирлĕ çын.

Пĕчĕкçĕ ачи ал-хапăл
Калаçса кăна килет:
— Çакăнтан чупам-и, папă,
Шавласа иртем-и?—тет.
— Çук, Володя, халь ан ашкăн,
Тӳс киле таврăниччен—
Терĕ ашшĕ, çавăтмашкăн
Тытрĕ унăн аллинчен.
Малалла иртетчĕ пулĕ,
Ывăлĕ курса чарать:
— Пысăк çыннăн пур куççулĕ.
Папă! Папă! Макăрать...
Çумăр пĕрчисем хуплană
Тумлă çын пăхса илет:
—Мĕн пирки куççуль, тăванăм?
Кам сана хур турĕ?—тет.
— Эп паян хĕрес çакманччĕ...
Тӳснĕ пысăк хурлăха
Калаймасть, куççулĕ анчĕ—

Пăвăнать вăл, антăхать.
— Паттăрлан, хĕрес туянăн,
Ан хăра, кĕр, кĕр калла.
Хам килмен, мана Ульянов
Хушрĕ, те, çапла кала.
— Эпĕ те хушатăп, папă,—
Тет ачи, чипер ача.
Охотников кăпăр-капăр
Алăк уçнăччĕ анчах,
Урине пусманччĕ, курчĕ
Виçĕ аршăн çӳллĕш пуп:
— Каялла уттар! Эй, хуп!—
Тенĕ сас кĕр-кĕр кĕрлерĕ
Янраса пӳлĕмĕпе,
Охотников чĕтĕрерĕ
Тытамак тытнийĕ пек.

Палламан çын каллĕ-маллĕ
Пĕр çӳле те пĕр çĕре
Пăхкаларĕ те йĕркеллĕн
Йăпатса, Михихвĕре
Куçĕпе чĕнсе сасартăк
Кĕчĕ кайрĕ пӳлĕме:
— Господин, ан тивĕр, лартăр!
Пăрахасчĕ хĕнеме,—
Терĕ çилленсе Ульянов,
Тухрĕ. Алăк хупăнчĕ.
Такама çапма шутланă
Кĕнеки те аллинчен

Ӳкрӗ урнӑ ҫӳллӗ пупӑн,—
Пӗвӗ пӗчӗк туйӑнчӗ.
Ӑнсӑртран хӑватлӑ тупӑ
Ҫуралчӗ-и умӗнче?..
Хӗнемесӗр халиччен
Вӗрентмен—шӑмӑ суйланӑ.
Уҫрӗ урӑх ҫӗн тӗнче
Хай инспектор, хай Ульянов.

———

## 16. ЧИПЕР АЧА

Чип-чипер ача Володя
Сарă çӳçлĕ те чечен.
Канăçсăр хаваслăх вучĕ
Унăн тарăн куçĕнче.
Кăн-кăвак та симĕс çутă
Перĕнсен чӳречене,
Ирхине тăрса вăл çунă
Пуринчен малтан питне.
Амăшне курас çеç умĕн
Пăрчăканăн, кайăкăн
Çăмăллăн тумланнă тумĕ
Ун йĕркеллĕ, яп-яка.
Ун пек шухă, ун пек харсăр,
Ун пек шавлă вылякан,
Пуçĕпе ӳксен те харăс
Макăрмасăр тăракан,
Чупнипе мăшăр кăçатă
Кулленех те кашни çул
Çĕтекенĕ пĕр ача та
Ун пек урăх, урăх çук.
Кăнтăрла-и, каç-и, ир-и,
Çип çăмхи пек ярăнса

Чупкалать, ялан ӳт-тирĕ
Унăн çăмăл та ансат.
Шурă хут тытать, темтепĕр
Сăр сăрлать те ӳкерет,
Тăпăр-тăпăр, тĕпĕр-тепĕр
Ташласа сиксе çӳрет,
Йăлăхсан, тата та урăх
Вăйă пур, пукан çине
Хăпарать, юрлать вăл юрă
Е калать сăввисене,
Е итлет ăна хăй амĕш
Кĕнеке вуланине,
Е пăхать хула урамĕ
Çынсемпе тĕркĕшнине.
Читлĕхре саркайăк пур та—
Кирлĕ пуль ĕçме-çиме.
Çитерет, хăватлă пултăр
Çуркунне çитсен вĕçме.
Вăл—Володя, вăл—Ульянов.
Кайăка хĕл сиввинче
Пасартан илсе вăл янă
Хайĕн пӳлĕм ăшшинче
Савăнма. Усал хĕл иртĕ,
Çитĕ ăшă çут тĕнче.
Çитĕ сар хĕвеллĕ ир те,
Кайĕ юр сăртсем çинчен.
Ун чухне хитре саркайăк
Унăн ывăçĕ çинчен
Вĕçĕ те хаваслăн кайĕ,

Сӗм вӑрманӑн варринче
Уйӑхла та янкӑр уҫӑ
Каҫсенче йӑви тавра
Сарӑлнӑ ем ешӗл ҫулҫӑ
Чӑшӑлтатнӑ вӑхӑтра
Ирӗкре юрри шӑранӗ
Шурӑ ҫӗмӗрт айӗнче.
Итлесе ҫынсем йӑпанӗҫ
Аслӑ Атӑл хӗрринче.

Халь хӗлле. Ҫанталӑк урнӑ.
Пӗрене те ҫурӑлать.
Ак Володя мӑйӗ урлӑ
Шарӑх ҫыхрӗ, тумланать.
Ҫунине илсе хавассӑн
Тухрӗ. Сивӗ, сивӗ кун!
Юр шавлать чӑйлатнӑ саслӑн
Пит ҫинче вылярӗ юн.

Урамра яка, ҫул такӑр.
Юр ҫӑвать те юр хӗвет.
Аякра сенкер кӑвакӑн
Курӑнать пӑрлӑ Сӗве.

Васкаса утать те халӑх
Тӑратать ҫухисене,
Анакан хӗвел хӑлхаллӑ,—
Ларнӑ йывӑҫ тӑррине.

Ту çинче Володя ларчĕ.
Çуни хăвăрт вăркăнать.
Чараймарĕ, килчĕ анчĕ
Тарăн юрлă çырана.
Сирпĕнчĕ, кусса йăванчĕ
Çунйнчен те инçене,
Пилĕкĕ таран пытанчĕ
Кĕрпекленнĕ юр ăшне.
Кăçатти, алси те юрлă.
Май хĕрри те йĕп-йĕпе.
Каçаймасть чăнкă кĕрт урлă.
Çӳлĕ йывăç кĕперпе
Çăпаталлă та сăхманлă
Сын иртетчĕ, курчĕ те
Хĕрелсе тăран çыранлă
Кĕрт çинчен, инкек çĕртен
Сĕтĕрсе ăна кăларчĕ,
Шăлкаларĕ тумтирне.
Ку çынна паллать Володя,
Курнăччĕ вăл кĕркунне:
— Эп сире паллатăп,—терĕ —
Пит ачаш пулас эсир,
Макăрса эсир çӳрерĕр,
Папăпа пырсан, пĕр ир...
Юр ăшне путсан та, эпĕ
Паттăр мар-и, куртăр-и?
Сивĕ кун, анчах йĕреп-и?—
Хăй четрет, çапах юри
Шăнманçи пек кăтартасшăн

Хускалмасть, аллисене
Ҫаварса хурать хăй ашшĕ
Евĕр, ҫурăмĕ хыҫне.

Охотников кăшт вăтанчĕ
Ҫак хăюллă ачаран,
Палласан та Николайчăн
Ывăлне: Мĕнле ят сан?—
Терĕ вăл.
— Володя—ят.
Хушаматăм ман—Ульянов.
Ун ҫине хĕвел йăл-ял
Ҫуттине хĕп-хĕрлĕ янă.
— Эп иртетĕп сирĕн ҫуртăр
Умĕнчен, ҫул май мана.
Эсĕ лар та, эпĕ туртăп,
Ярăнтарăп ҫунăна.
Унсăрăн ырса утаймăн—
Тет Охотников, чĕнет.
— Эп хамах.—Вăйсем нумай ман—
Тет Володя, хĕпĕртет.

1939—40.

Цена 2 р. 50 к.

ЯКОВ УХСАЙ

МЕЧТА

На чувашском языке

ГОСИЗДАТ ЧАССР
1941